Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУЛĔ 28 ЫТЛАРИКУН 172 (4985) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать — *ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ* — Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ

Республикă Верховнăй Совечĕн йалан ĕçлесе тăракан комиссийĕсем

Ийулĕн 27-мĕшĕнче Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн йаланлăх комиссисене: Саккунсем хатĕрлекен Комиссине тата Бÿджет Комиссине суйларĕ.

Йаланлăх Комиссисем туни тата вĕсен ĕçĕсем пирĕн республикĕн политикăла тата хуçалăхла пурнăçĕнче питĕ пысăк вырăнта тăраççĕ. Социалисăмлă государствăра саккун тата саккунлăх мĕнле пысăк вырăнта тăнине ССР Сойуз Конституцин 32-мĕш статйи йар уççăн кăтартса парать. ССР Сойуз Конституцин 32-мĕш статйинче акă мĕн калана: „ССР Сойузĕн Саккун кăларакан влаçне ССР Сойузĕн пĕртеннпĕр Верховнăй Совечĕ анчах пурнăçа кĕртет". Пирĕн Совет Сойузĕнче, çавăн пекех сойузлă тата автономлă республиксенче темиçе оргăн саккун кăларас йĕркене пĕтерме вăхăт çитнине, темиçе оргăнсем саккун кăларни саккунсем çирĕп тăрас принципа хирĕç пынине, саккунсем çирĕп тăни пире халĕ нихăçанхинчен те ытларах кирлине Сталин йулташ пĕрре çеç мар кăтартса пана.
пĕрре çеç мар кăтартса пана.

Сойузлă тата автономлă республиксенче саккунсем кăларакан пĕртеннпĕр оргăн сойузлă республиксемпе автономлă республиксен Верховнăй Совечĕсем анчах пулса тăнине Сталинла Конституци çине çырса хурса çирĕплетнĕ. Сталинла Конституци тăрăх тунă Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн Конституцин 21-мĕш статйинче саккунсем кăларас влаç республикре кам аллинче пулмаллине кăтартса панă. Вăл статйа çапла калать: „Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ Чăваш АСС Республикĕн саккун кăларакан пĕртеннпĕр оргăнĕ пулса тăрать".

Чăваш АССР Верховнăй Советне саккунсем кăларакан пĕртеннпĕр оргăн туса йышăнни шăпах Конституципе килĕшсе пурнăça кĕрсе пырать. Рабочисемпе хресченсен государствинче çеç чăн-чăн саккунлăх пуç пулса тăма пултарать. Социалисăмлă государствă çеç хăйĕн мĕн пур граждансене саккуна йуратма, ăна хисеплеме, çирĕп тытса пыма вĕрентет.

Çав вăхăтрах фашисла государствăсенче саккун ăнланăвне те йалтах пĕтерсе лартнă. Фашисла государствăсенче саккун кăларас ĕç капиталиссемпе помещиксен, пуç касакансем аллинче. Самахран, фашисла Германире пĕтĕм „саккунсене" Гитлĕр кăларать. Унăн „саккунĕсем"—рабочисемпе ĕçхресченĕсене тĕрмене хупмали, концентрацилĕ лагĕрсене йамали, пуç касса, çакса вĕлермели йунлă ĕçсем. Хăйсене хăйсем „демократилĕ" текен государствăсенче те саккунсене президентсем, корольсем, министрсем кăлараççĕ. Саккун кăларас ĕçе халăха çывăха та йамаççĕ.

Чăваш республикĕ РСФС Республикне кĕрет. Çавăнпа та, ССР Сойузĕн тата РСФС Республикĕн саккунĕсем Чăваш республикĕн территоринче обйазательнă пулса тăраççĕ. ЧАССР Верховнăй Совечĕн саккунсем хатĕрлекен *комиссийĕ республикĕн саккунĕсене ССР Сойузĕн тата РСФСР саккунĕсене майла, Октаберти Социалисăмла революцин çĕнтерĕвĕсене çирĕплетмели*, совет халăхĕн правине хÿтлемели саккунсем хатĕрлемеле.

Бÿджет Комиссин пахалăхĕ те, унăн вырăнĕ те кунтан пĕчĕк мар. Бÿджет Комиссийĕ умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Бÿджет—вăл доходсемпе расхутсен планĕ, республик хуçалăхĕ ÿссе пыни курăнса тăракан план; государствă укçи тенкине халăх ĕçĕшĕн, унăн интересĕшĕн расхутламали план. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Бÿджет Комиссийĕ—бÿджетăн доходпа расхут пайĕн кашни статйине тĕплĕн пăхса тухакан, Верховнăй Совет çирĕплетнĕ хыççăн бÿтжета ĕçе кĕртсе пынине йалан тĕрĕслекен оргăн пулса тăрать. Верховнăй Совет Чăваш республикĕн хуçи пулнă май, республикĕн хуçи пулнă май, республик
ликен хуçи пулна май, республик
парламĕнчĕ мĕнпур доходсемпе расхутсене тĕрĕслет, укçа-тенкĕ социалисăм строительствине малашне ÿстерсе пырас ĕçе, республикăн промышленнăçне, йалхуçалăхне, культурине тата вăйлатас ĕçе йарассишĕн тăрăшать.

Йаланлăх комиссисем туса хуни Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ хăйĕн кулленхи практикăлă государствă ĕçне пуçласа йанине пĕлтерет. Пĕтĕм Чăваш халăхĕ хăйĕн депутачĕсене халăх телейĕшĕн, хамăрăн социалисăмлă тăван çĕршывăн хăвачĕпе чапне ÿстерессишĕн, Чăваш республикĕн хуçалăхпа культурине малала тата вăйлă çеклесе пырассишĕн хăйсен ĕçĕсене ăнăçулă тума сĕнет.

Чăваш республикĕн парламĕнчĕ—чăваш халăхĕн чи лайăх представителĕсен аслă пухăвĕ—республик умĕнче тăракан государствăлă, политикăлă тата хуçалăхлă пысăк задачăсене сÿтсе йавса татса парать. Çессире сÿтсе-йавакан ыйтусене депутатсем пурте пĕр шухăшлă, пĕр кăмăллă пулса пăхса тухаççĕ. Ку вăл совет халăхĕн моралĕ-политикăлă пĕрлĕхне, рабочисен, хресченсен, интеллигенцин интересĕсем пĕр пеккине кăтартса паракансенчен пĕри пулать. Халăх хăй суйланă депутатсенчен, Верховнăй Совет суйланă йаланлăх комисси членĕсене хăйсен ĕçĕсенче Ленин—Сталин парти стилĕпе ĕçлеме, государствăн Ленин пек, Сталин пек деятелĕсем пулма хушать. Верховнăй Совет тата вăл суйланă Комиссисен ĕçĕсем Совет государствин, хамăрăн тăван çĕршывăн хăвачĕпе тĕрекне çирĕплетес йенĕпе пулса пымала—çакна ыйтать чăваш халăхĕ республик парламĕнчĕн йаланлăх комиссисенчен.

Чăваш АСС Республикĕн пĕрремĕш созыври Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессин 1938 çулхи ийулĕн 27-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен

Информацилĕ пĕлтерÿ

Ийулĕн 27-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, ЧАСС Республикĕн пĕрремĕш созыври Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессин иккĕмĕш ларăвĕ пулнă.

Ларăва председатĕл пулса йертсе пыраканĕ—Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Председателĕ депутат Н. П. Павлăв.

ЧАССР Верховнăй Совечĕ
ЧАССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсен полномочийĕсене тĕрĕслени çинчен ЧАССР Верховнăй Совечĕн Мандат Комиссин председателĕн депутат Полтĕв Петр Çтепанăвич докладне итленĕ.

Полтĕв йулташ ЧАССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсен полномочийĕсене 96 суйлав округĕ тăрăх тĕрĕслени çинчен ЧАССР Верховнăй Совечĕн Мандат Комиссийĕ йышăннă постановленине вуласа парать:

„Тĕп Суйлав Комиссийĕ ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе кашни депутат пирки уйрăмăн тăратнă мĕн пур суйлав докуменчĕсемпе материалĕсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн Мандат Комиссийĕ çакна палăртать:

1. Пĕтĕм 96 суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутатсем суйлассине ЧАССР Конституцийĕ тата „ЧАССР Верховнăй Советне суйламали Положени" тăрăх тата вĕсемпе пĕтĕмпех килĕшÿлĕн туса ирттернĕ.

2. Пĕр-пĕр суйлав округĕ тăрăх суйлава улăштарма нимĕнле сăлтав та çук, çавăн пекех тата ЧАССР Верховнăй Советне депутатсем суйлас тĕлĕшпе Конституцине тата суйлав Положенине пăсни çинчен уйрăм суйлав округĕсем тăрăх та, Тĕп Суйлав Комиссинче те нимĕнле жалăбăсемпе заявленисем те çук.

Çакăнта каланисем тăрăх ЧАССР Верховнăй Совечĕн Мандат Комиссийĕ ЧАССР Верховнăй Совечĕн Тĕп Суйлав Комиссинче регистрациленĕ мĕн пур депутатсен полномочийĕсене *тĕрĕс тесе йышăнать, вăл депутатсен спискине „Чăваш Коммунĕ" ийунĕн 30-мĕшĕнче* тухнă 149(4962)-мĕш номерĕнче тата „Красная Чувашия" хаçатăн 149(5352)-мĕш номерĕнче пичетлесе кăларнă".

Мандат Комиссин докладĕ тăрăх пренисенче депутатсем: Иванов К. И. (Канаш районĕнчи Катек округĕнчен суйланă депутат), Çеменав Н. М. (Трак районĕнчи Ÿсĕк округĕнчен суйланă депутат) тухса калаçнă.

Трак, Елĕк, Çĕрпÿ тата Шăхасан районĕсенчи депутатсен ушкăнĕнчен депутат Çеменăв Н. М. панă сĕнÿ тăрăх, ЧАССР Верховнăй Совечĕ Мандат Комиссин докладĕ тăрăх çакăн пек постановлени йышăнать:

„Мандат Комиссин докладне итлесе, Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

1. ЧАССР Верховнăй Совечĕн мĕн пур 96 суйлав округĕ тăрăх суйланă тата ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиссийĕ регистрациленĕ депутатсен полномочийĕсем тĕрĕс тесе йышăнакан Мандат Комиссин докладне çирĕплетес.

2. Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиссийĕ ĕçне пĕтнĕ тесе шутлас".

Кун хыççăн, Çессин иккĕмĕш ыйту çине куçать.

Трак, Шупашкар, Шăмăршă районĕсенчи депутатсен ушкăнĕнчен депутат Меценатăвă Пелагейа Çергейĕвнă *Саккунсем хатĕрлекен Комиссин тăвасси çинчен сĕнÿ* парать.

Верховнăй Совет Саккунсем хатĕрлекен Комиссин составне 9 çынран туса çирĕплетнĕ.

1. Комиссин председателĕ—Никифăрăв Иван Никифăрăвич, Темĕр округĕнчен суйланă депутат, Йелчĕк р.

Комиссин членĕсем:

2. Немцĕв Владимир Михайлăвич—Йелчĕк округĕнчен суйланă депутат, Йелчĕк р.,

3. Сафиуллин Фадкла Сафиуллăвич—Шăнкăртам округĕнчен суйланă депутат, Шăнкăртам р.,

4. Виноградăвă Йефимийа Борисăвнă—Нурăс округĕнчен суйланă депутат, Вăрнар р.,

5. Воронцовă Аннă Иванăвнă—Шăмăршă округĕнчен суйланă депутат, Шăмăршă р.,

6. Дренйасăв Николай Николайĕвич—Пăрачкав округĕнчен суйланă депутат, Пăрачкав р.,
лана депутат, Пăрачкав р.,

7. Андрейĕв Дмитрий Андрейĕвич—Аслă Арапуç округĕнчен суйланă депутат, Турхан р.,

8. Куликов Тимофей Порфирйĕвич—Вутлан округĕнчен суйланă депутат, Елĕк р.,

9. Йефремăв Петр Йефремăвич—Карай округĕнчен суйланă депутат, Трак р.

Шупашкар хули, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Канаш районĕсенчи депутатсен ушкăнĕнчен депутат Ахазăв Тимофей Аркадйĕвич ЧАССР Верховнăй Совечĕн Бÿджет Комиссин тăвасси çинчен панă сĕнÿве ЧАССР Верховнăй Совечĕ йышăнать.

Бÿджет комиссине 11 çынран суйлаççĕ:

1. Комиссин председателĕ—Медйанин Кирилл Дмитрийĕвич—Карач округĕнчен суйланă депутат, Куславкка р.,

2. Йакимăвă Ксенийа Данилăвнă—Балдай округĕнчен суйланă депутат, Йетĕрне р.,

3. Измайлăв Александр Измайлăвич—Тăвай округĕнчен суйланă депутат, Тăвай р.,

4. Хабарăв Николай Çеменăвич—Тулик Хураски округĕнчен суйланă депутат, Шупашкар р.,

5. Родионăв Александр Степанович—Çеменовский округĕнчен суйланă депутат, Парачкав р.,

6. Смирновă Федосийа Йакăвлĕвнă—Тайапа округĕнчен суйланă депутат, Йелчĕк р.,

7. Меценатăвă Пелагейа Çергейĕвнă—Елĕк округĕнчен суйланă депутат, Елĕк р.,

8. Йакăвлĕв Çтепан Йакăвлĕвич—Есмĕл округĕнчен суйланă депутат, Сĕнтĕрвăрри р.,

9. Бодров Николай Çеменăвич—Йепреç округĕнчен суйланă депутат, Йепреç р.,

10. Лебедĕвă Аннă Кириллăвнă—Турдайĕвă округĕнчен суйланă депутат, Кувакинă р.,

11. Мурашкин Иван Çергейĕвич—Чуварлей округĕнчен суйланă депутат, Улăтăр р.

Çакăн хыççăн Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Перремĕш Çессийĕн иккĕмĕш ларăвĕ хупăнать.

Мандат Комиссин председателĕ депутат П. Ç. Полтĕв тунă докладран

Йулташсем—депутатсем, Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикăн Верховнăй Совечĕ суйланă Мандат Комиссийĕ, ЧАССР Конституцин 31-мĕш статйи тăрăх тата хамăр республикĕн Верховнăй Советне суйламали Положенин 35-мĕш статйи (пункт „д") тăрăх, ЧАССР Верховнăй Совет депутачĕсен полномочийĕсене тĕрĕслес ĕçе туса ирттерчĕ.

Мандат Комиссийĕ кандидатсене депутата регистрацилени протоколĕсем пуррине, сасăлани протоколĕсем, шутлав листисем, округри комиссисен протоколĕсем, кашни депутат пирки документсем пуррине тĕрĕслесе тухрĕ.

Пур материалсене те тĕрĕсленĕ хыççăн, Мандат Комиссийĕ çакна палăртрĕ: 96 суйлав округĕнче пуринче те Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикăн Верховнăй Совет депутачĕсене Чăваш АССР Конституцийĕпе тата хамăр республикĕн Верховнăй Советне суйламали Положенипе пĕтĕмпех килĕшÿлĕ ирттернĕ.

Мандат Комиссийĕ çавăн пекех тата çакна палăртрĕ: нихăш округ тăрăх та суйлавсене пăрахăçа кăларма нимĕнле сăлтавсем те çук. Мандат Комиссийĕ Тĕп Суйлав Комиссийĕнчен йышăннă округсенчи суйлав комиссисен ĕçĕсенче те çавăн пекех Тĕп Суйлав Комиссинче те ЧАССР Верховнăй Совет депутачĕсене суйлани пирки хăш округ тăрăх та пулин иккĕлентерекен жалăбăсемпе заявленисем çук.

Çапла ĕнтĕ, коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсене пурне те депутата ЧАССР Конституцийĕпе тата ЧАССР Верховнăй Совет суйлавĕсене ирттермели Положенипе пĕтĕмпех килĕшÿлĕ суйланă.

Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикăн Верховнăй Совет суйлавĕсем пур суйлав округĕсенче те чăваш халăхĕ пысăк активлăне тата пурте пĕр шухăшланне кăтартса пачĕç. (Нумайччен алă çупаççĕ).

Чăваш АССР Верховнăй Совет суйлавĕнче сасă правипе усă куракан мĕн пур 556.778 суйлавçăран сасăлама 551.139 суйлавçă хутшăннă, вăл ĕнтĕ сасă правипе усă куракан мĕн пур граждансен хисепĕнчен 99,0 процент пулать.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламалли мĕн пур округсенче коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн 539.311 çын сасăланă, вăл ĕнтĕ сасăлама хутшăннă суйлавçăсенчен 97,8 процент пулать.

РСФСР Верховнăй Советне тата ЧАССР Верховнăй Советне суйланă кун—1938 çулхи ийунĕн 26-мĕшĕнче—чăваш халăхĕ, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, хăйĕн моралĕ-политикăлă пĕрлĕхне, коммунисăм çĕнтерĕвĕшĕн малала кĕрешес вăй-хăватне, хăй большевикла партине, унăн Тĕп Комитетне тата халăхсен аслă сулпуçне Сталин йулташа вĕçĕмсĕр шанса тата йуратса тăнине тепĕр хут пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартса пачĕ. (Нумайччен алă çупни овацине куçать, пурте ура çине тăраççĕ. „Ура Сталина!" тесе кăшкăраççĕ).

Аслă Сталинла Конституци йалавĕпе пырса, тĕнчери чи демократилĕ суйлав саккунĕ тăрăх чăваш халăхĕ государствă влаçĕн аслă органне—Верховнăй Совета туса хучĕ. Социалисăмлă демократисăмăн çак чаплă çĕнтерĕвĕ Ленин—Сталин партийĕн аслă кĕрешÿпе çĕнтерĕвĕсен результачĕ, социалисăм çĕнтерĕвĕсен результачĕ пулса тăрать; ку вăл фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă националисла агенчĕсене аркатса тăкнин результачĕ пулса тăрать. (Алă çупаççĕ).

Пирĕн республикăн Верховнăй Совет депутачĕсен составĕ социалисăм çĕнсе илнисене кăтартакан усăмлă картинă пулса тăрать. Сталин йулташ тăрăшнипе воспитани илнĕ, аслă Сталина, большевикла партине, хамăрăн хăватлă тăван çĕршыва йуратнипе хавхаланнă чăваш халăхĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем пулма чи лайăх представителĕсене суйларĕ.

Чăваш халăхĕн пĕрремĕш пĕтĕм халăх депутачĕ пулма, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, социалисăм çĕнтерĕвĕсен организаторне, совет халăхне телей туса паракана, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аслă сулпуçне тата тусне — Сталин йулташа суйланă (тăвăллăн алă çупаççĕ, пурте ура çине тăраççĕ), унăн йачĕпе ийунĕн 26-мĕшĕнче мĕн пур суйлавçăсем коммунистсемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлама кайрĕç.

Пирĕн республикăн Верховнăй Совет депутачĕсене аслă Сталинăн чи çывăх соратникĕсене: Вячеслав Михайлăвич Молотăв, Михаил Иванăвич Калинин, Андрей Андрейĕвич Андрейĕв, Климент Йефремăвич Ворошилăв, Николай Иванăвич Йежов, Андрей Александрăвич Жданăв, Лазарь Моисейĕвич Каганович, Анастас Иванăвич Микойан йулташсене суйланă. (Алă çупаççĕ). Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕсем хушшинче Пĕтĕм Сойузри Коммунистсен (большевиксен) Парти членĕсемпе кандидачĕсем 65 çын йе 67,7 процент тата партире тăманнисем 31 йе 32,3 процент.

Кунтан çакăн пек вывăдсем тухса тăраççĕ: пĕрремĕш—пирĕн коммунисла партин калама çук пысăк авторитетпа тата совет халăхĕн шанăçĕпе усă курать, çав шанăçа пирĕн парти ĕççыннисен ĕçĕшĕн чунтан-чĕререн тăрăшнипе, ĕççыннисене мĕн пур тăшмансене çĕнтермелле тунă хăйĕн аслă политикипе çĕнсе илнĕ. Çак асăйран та аслă шанăç — Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕсенчен 67,7 проценчĕ большевикла парти членĕсем пулнинче палăрса тăрать. Иккĕмĕш вывăд вăл акă мĕнре: парти çак çулсем хушшинче партире тăман большевиксене, тÿрĕ, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн пĕтĕм чунтан тăрăшакан, халăх умĕнче авторитетпа усă куракан большевиксене калама çук нумай вĕрентсе ÿстерме пултарчĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕсен хисепĕнче: рабочисем 29, хресченсем 41, служащисем тата совет интеллигенцин представителĕсем 26.

Депутатсен составĕнче парти работникĕсем 17, совет ĕçĕнче 28 йулташ ĕçлеççĕ, учителĕсем 5, йалсовет председателĕсем 7, колхоз председателĕсем 6, бригадирсемпе тракторисем 6, пичет работникĕсем 3, çарти работниксем 2, инженерла-техникăлă работниксем 4, комсомол работникĕсем 2. Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн тата милици работникĕсем 2, МТС директорĕсем 2, искусствă работникĕ 1.

Депутатсен составĕнче промышленнăçри стахановецсем 4, йалхуçалăхĕнчи стахановецсем 7.

ЧАССР Верховнăй Совет депутачĕсен составĕ социалисăм строительствинчи çитĕнÿсене, партипе совет влаçĕн çитĕнĕвĕсене кăтартса тăрать.

Пирĕн республикĕн Верховнăй Совет депутачĕсен составĕнче социалисăм строительствин пур участкисенче ĕçлекенсем те пур. Депутатсен составĕнче ĕçри новаторсем, ĕçе организацилеме, ĕçĕн техникине ăста пĕлекенсем пур, вĕсем ĕç тухăçлăхне ÿстерме хăватлă хавхаланнă, вĕсем тăван çĕршыва, большевиксен партине, аслă Сталина вĕçĕмсĕр йуратаççĕ (Алă çупаççĕ).

Верховнăй Совет депутачĕсен хисепĕнче—Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн представителĕсем пур. Совет халăхĕ, Сталин йулташ мобилизацилĕ хатĕрлĕхре пулма кăтартса панине астуса, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕшĕн куллен тăрăшать, тăшмана, вăл пирĕн çине тапăнма хăйсан, хăйĕн территорийĕ çинчех çĕмĕрсе тăкма хатĕр тăрать.

Пирĕн совет халăхĕ хамăрăн совет разведки, каратĕльнăй органсем тăвакан ĕççене пĕтĕмпех ырлать. Çавна вăл Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн работникĕсене депутата суйланипе кăтартса пачĕ. Çапла пирĕн халăх Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсемпе пĕрле партин тата совет халăхĕн пур тăшманĕсене те çĕмĕрсе тăкма хатĕррине кăтартрĕ.

Верховнăй Совет депутачĕсенчен 16 çын аслă шкулсенче, 37 çын вăтам, 43 çын пуçламăш шкулсенче вĕренсе тухнă. Аслă тата вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисем çурри ытла.

Çулсем тăрăх илсен, депутатсем çакăн пек пайланаççĕ: 20 çула çитменнисем—2 депутат, 21 çултан пуçласа 25 çула çитиччен—11, 26 çултан пуçласа 30 çула çитиччен—14, 31 çултан пуçласа 35 çула çитиччен—35, 36 çултан пуçласа 40 çула çитиччен—14. 41 çултан пуçласа 50 çула çитиччен—16 депутат, 50 çултан иртнисем—4 депутат.

Депутатсен хисепĕнче 20 çула çитменнисем 2 депутат, 25 çула çитиччинхисем 11 депутат пурри — Социалисăмлă аслă Октябĕр революцийĕ çитĕнтернĕ çамрăксен творчествăлă пултарулăхĕ вăйлă ÿссе пынине кăтартать.

Чăваш АССР Верховнăй Советне 26 хĕрарăма суйланă. Хĕрарăм-депутатсем пирĕн совет хĕрарăмĕсен тивĕçлĕ представителĕсем пулса тăраççĕ.

Вĕсем государствă ĕçĕнче, хуçалăхпа культурă строительствинче арçынсемпе пĕр танах хутшăнса ĕçлеççĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советĕнче 6 национальнăç представителĕсем пур: 54 чăваш, 37 вырăс, 2 тутар, 1 йеврей, 1 армйан, 1 грузин.

Пире хăйĕн депутачĕсем пулма суйласа, чăваш халăхĕ пире аслă та усă сталинла наказ пачĕ. Депутатсен мĕнле пулмали çинчен Сталин йулташ каласа пана.

Пирĕн, депутатсен, пурин те йаланах суйлавçăсен наказне асра тытмала, пирĕн Ленин пек, Сталин пек пулмала. Чăваш АССР Верховнăй Совет суйлавĕсем акă мĕн кăтартрĕç: чăваш халăхĕ аслă совет çĕршывĕн пĕтĕм халăхĕсемпе пĕрле, ленинла-сталинла аслă парти йертсе пынипе, етемлĕх генийĕ Сталин йулташ ăслăн йертсе пынипе татах та çĕнĕ ÿсĕмсем, çĕнĕ çĕнтерÿсем патне, коммунисăм патне малала пырĕ! (Алă çупаççĕ).

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Мандат Комиссийĕ ĕçлесе пĕтернĕ хыççăн çакăн пек решени йышăнчĕ тата вăл решенине пирĕн республикăн Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессине пăхса тухма тăратать:

„Тĕп суйлав комиссийĕ ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе кашни депутат пирки уйрăмăн тăратнă мĕн пур суйлав докуменчĕсемпе материалĕсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн Мандат Комиссийĕ çакна палăртать:

1. Пĕтĕм 96 суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутатсем суйлассине ЧАССР Конституцийĕ тата „ЧАССР Верховнăй Советне суйламали Положени" тăрăх тата вĕсемпе пĕтĕмпех килĕшÿлĕн туса ирттернĕ.

2. Пĕр-пĕр суйлав округĕ тăрăх суйлава улăштарма нимĕнле сăлтав та çук, çавăн пекех тата ЧАССР Верховнăй Советне депутатсем суйлас тĕлĕшпе Конституцине тата суйлав положенине пăсни çинчен уйрăм суйлав округĕсем тăрăх та, Тĕп Суйлав Комиссинче те нимĕнле жалăбăсемпе заявленисем те çук.

Çакăнта каланисем тăрăх ЧАССР Верховнăй Совечĕн Мандат Комиссийĕ ЧАССР Верховнăй Совечĕн Тĕп Суйлав Комиссинче регистрациленĕ мĕн пур депутатсен полномочийĕсене тĕрĕс тесе йышăнать, вăл депутатсен спискине „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн 1938 çулта тухнă 149-мĕш тата „Красная Чувашия" хаçатăн 149-мĕш номерĕсенче пичетлесе кăларнă". (Алă çупаççĕ).

Украинă СС Республикĕн Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ уçăлнĕ

Ийулĕн 25-мĕшĕнче Кийĕвра Украинă Советлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ уçăлнă.

Çессине чи ватă депутат, аслă йăхăн тава тивĕçлĕ деятелĕ, профессăр Дмитрий Матвейĕвич Синцов уçнă. Украинă ССР Верховнăй Совечĕн Председателне пурте пĕр саслăн М. А. Бурмистенко депутата суйланă.

Украинă СС Республикĕн Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш депутачĕ йуратнă Сталин патне тата унăн чи çывăх соратникĕ—ССР Сойузĕн правительстви пуçлăхĕ Молотăв йулташ патне саламлă телеграммăсем йама сĕннине депутатсем тăвăллăн алă çупса йышăннă.

(ТАСС).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Ийулĕн 4 кун хушшинче центрти Китайра Йанцзы йуханшывĕн тÿрем хĕрринче вăру-тăру чылай йăвăрланнă. Ийулĕн 21-мĕшĕнчен пуçласа йапонецсем Хуку районне пысăк вăйсем пуçтараççĕ. [illegible] 8 пин салтак антарса хăварнă. Çавăн пекех йапонецсем Пайцзу кÿллине Йанцзы шывĕпе пĕрлештерекен шыв йупин хĕвеланăçри çыранĕ çине салтаксем антарнă. Çырана сыхласа тăнă Китай салтакĕсем йапонецсене питĕ хаярран хирĕç тăнă. Çыран çинче хирĕç-хирĕç тăрса штыксемпе вăйлă çапăçнă, ăл çапăçу икĕ кун хушши пынă. Китай позицисен мĕн пур укрепленийĕсене йапонецсем канонеркăсем çинчен персе тата сывлăшран тапни-сыпписĕр бомбăсем пăрахса çĕмĕрсе пĕтернĕ. Çырана сыхласа тăнă Китай салтакĕсем хăйсен позицисене пăрахса каймасăр геройсен вилĕмĕпе вилнĕ.

Ийулĕн 23-мĕшĕнче кăнтăрти Китайра йапонецсем çĕнĕрен Наньаосань-Намао утравĕ çине кĕрсе йулнă. Китай çарĕсем тата хĕçпăшалланнă халăх йапонецсене питĕ хытă хирĕç тăнă. Йапонецсен 20 катĕрне йахăн шыва путарнă, çапăçура Йапони 200 салтакне ытла вĕлернĕ.

Выђăх-чĕрлĕх ĕрчетесси—хисеплĕ ĕç

Епĕ 1933 çултанпа Патăрйелĕнчи (Çĕрпӳ р.) „Богатырь" колхозра сысна ферми пуçлăхĕ пулса ĕçлетĕп. Мана фермă пуçлăхне суйлаччен фермăра 71 пуç сысна, пурте вырăнти вĕтĕ йышши сыснасем пулнă. Епĕ фермăна ĕçлеме кĕриччен сыснасене мĕнле пăхмалине те тĕплĕн пĕлмен.

Чи малтанах епĕ „Свиноводство" журнал çырăнса илтĕм. Вăл журнала вуласа Украинăри Кийĕв хули çывăхĕнчи сысна фермисенче мĕнле ĕçленипе паллашрăм. Вĕсем пурте ăратлă сыснасем ĕрчетеççĕ. Епĕр те хамăрăн фермăри сыснасене ăратлăлатма шутларамăр. Хамăр районранах Иванавăри колхозран акăђчан шурă ăратлă сысна аçи илсе килтемĕр. Вара пирĕн фермăри сыснасем ăратланса пыма пуçларĕç. Епĕ ĕç лайăхланса пынине кура тата тăрăшса ĕçлеме пуçларăм. Колхозниксем те сыснасене татах ăратлатас терĕç. Пире çав йахлă сысна аçисене татах кӳрсе пачĕç.

Фермăра сыснасене йуратса пăхнипе вĕсен шучĕ кашни çул ӳссе пычĕ. 1934 çулта 185 пуç пулнă. 1935 çулта—310 сысна, 1936 çулта—400 сысна, 1937 çулта—440 сысна пулнă. 1938 çулта государства планĕ тăрăх фермăра сыснасен шучĕ 600 пулмала, пайанхи куна 510 сысна пур. Кăçал государствăна 73 пуç панă, колхозра ĕç вăхăтĕнче перле апатланма 10 сысна пуснă, колхозниксене 291 пуç сысна сутнă.

Чирлесе вилекен сыснасен шучĕ чаксах пычĕ. Малтанхи çул сыснасем 20 процент вилнĕ, иккĕмĕш çул 15 процент, виççĕмĕш çул 10 процент, тăваттăмĕш çул 3 процент вилнĕ. Кăçал вилни пулмарĕ.

Фермăра колхозри санитар Иван Мотверăвпа участкăри ветеринар-фельдшерĕ Никита Рисков йулташсем сыснасене йаланах пăхса мана кулленех кăтартусем параççĕ. Сысна пăхакансем Йегор Иефремăв 3 çул, Илларион Трофимăв икĕ çул çурă, Прохăр Григорйевпа Анисийа Иванова пĕррремĕш çул ĕçлеççĕ. Вĕсем сыснасене йуратса пăхаççĕ. Сыснасем хутшăнса пынипе, вĕсен ĕçкунĕсен шучĕ те ӳссех пырать.

Сысна пăхакансем малтанхи вăхăтра кухђăра апат пĕçерне çĕртех пурăнна. Фермă вăйланса пынипе сысна пăхакансем те кулђтурăлă пурăнма пуçларĕç. Иртнĕ çул сыснасене пăхакансем валђи пурăнма уйăрăм пӳрт лартнă. Вĕсен кашнин уйăрăм крован.

Сысна витинче таса, çутă. Сыснасене рацион тăрăх вăхăтра çитерсе шăваратпăр. Çурисем хăвăрт ӳсеççĕ. Епĕр шутланă тăрăх сысна çурисем, вăтамран илсен, кашни уйăхра 4 кило ӳссе пыраççĕ.

Фермăран çуллен пысăк тупăш илетпĕр. 1934 çулта 2000 тенкĕ, 1935 çулта 3500 тенкĕ, 1936 çулта 4500 тенкĕ, 1937 çулта 6000 пин тенкĕ тупăш илнĕ. Кăçал 8000 тенкĕрен кайа мар илетпĕр.

1933 çултанпа фермăра ĕçлесе выђăхсене пăхас ĕçе лайăх вĕренсе çитрĕм.

Выђăх-чĕрлĕх ĕрчетесси—хисеплĕ ĕç. Лайăх ĕçленине кура мана кăçал Çĕрпӳ районĕнчи Уйкас суйлав округĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйларĕç. Депутата суйлани вăл пысăк та хисеплĕ тата ответлă ĕç. Çак пысăк шанăçа епĕ татах та хамăн пĕлӳлĕхе ӳстернипе, Сталин вĕрентнĕ пек ĕçлесе пынипе ответлетĕп. Епĕ халиччен çакăн пек Çĕççинче пулса курман. Ĕлĕк ун çинчен шутлама та пултарайман. Пире пысăк ĕçе тума пăхса ӳстернишĕн коммуниссен партине, Сталин йулташа чĕререн тав тăватăп.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ
Иван Йевдокимăв.

Йал çĕнĕ кадрсем ӳстерчĕ

Епеçре ĕлĕк хутла пĕлекенсем 5 çын çеç пулнă. Йалта шкул та пулман. Хурал пӳрчĕ хăйĕн тискерлĕхĕпе хресченсене хăратса тăнă. Старăстăсем куланай пухма килсенех укçа тӳлеймен чухăнсене ку хурал пӳрчĕ умĕнче „ăшаласа" хăварнă. Хресченсемшĕн хурал пӳрчĕ тискер çурт пулнă.

Колхозла Епеç тĕпренĕх çĕнелчĕ. Çĕнĕ пурнăçа кулаксемпе, халăх тăшманĕсемпе вăйлăн кĕрешсе пынипе, вĕсене çĕнтернипе тунă. Колхозра 260 кил пĕрлешсе тăрать. Пур колхозниксем те выђăх-чĕрлĕхлĕ, кирлĕ чухлĕ тырпуллă пулчĕç.

Колхозăн сурăх тата сысна фермисем пур. Ку фермăсем çулран-çулах пысăк тупăш парса пыраççĕ.

Çапла ĕнтĕ ĕлĕк йал илемне йарса тăнă хура пӳртсем тĕп пулчĕç. Вĕсен вырăнне катмар та илемлĕ çуртсем куратăн. Иртнĕ çулта çеç 17 колхозник хуçалăхĕ çĕнĕ пӳртсем лартнă. Туллимар вăтам шкул çурчĕ йала татах та лайăх сăн кĕртет. Йулашки çулсенче клуб лартнă, магазин тунă.

Йалĕпе илсен хутла пĕлекенсем 1600 çын шутланаççĕ. Туллимар вăтам шкулта 400 ача, техникумсенче 6 ача тата вăтам шкулсенче икĕ ача вĕренеççĕ. Совет влаçĕ пулнă хыççăн, Епеçри хресченсенчен нумайĕшĕ вăтам тата аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă. Захарăв Канашри педучилищăра ассистентра, Çтепанăв—машинистра, Волкăв Хĕрлĕ Çар командиренче ĕçлеççĕ. 22 çын тĕрлĕ предприйатисемпе учрежденисенче инспекторсем, бухгалтĕрсем тата ытти специалиссем пулса ĕçлеççĕ.

Пуйан пурнăçпа пурăнакан колхозниксем тĕрлĕ музыкăсемпе выђăма вĕренчĕç. Ĕлĕк йалта нимĕнле музыкă инструменчĕ те пулман. Халĕ 9 хуткупăс, 17 балалайкă, 3 гитара тата ыттисем те пур.

Çем. Федотăв.

Кашни çулах пысăк тупăш илетпĕр

Выђăх-чĕрлĕхрен пысăк тупăш илесси—ăна тĕплĕн йуратса пăхнинчен килет. Пирĕн Çĕрпӳ районĕнчи Анатри Кипекçери „Ĕмĕт" колхозра 1931 çулта ĕне ферми организацилесен, хăшпĕр ăнланайман çынсем:

— Пирĕн вырăнти ĕнесене темĕн чухлĕ пăхсан та пысăк тупăш паракан пулас çук, тесе калаçатчĕç.

Епĕ 3-мĕш çул ĕнтĕ „Ĕмĕт" колхозра дойаркă пулса ĕçлетĕп. Çак вăхăтра выђăха мĕнле пăхсан мĕн чухлĕ тупăш панине аван пĕлекен пултăм. Епĕ выђăхсене тĕрĕс пăхас ĕçе вĕренсе çитрĕм.

Колхозра фермă организациленĕ вăхăтра пирĕн пурĕ 50 ĕне пулнă, вĕсем пĕри те ăратлă пулман. Йулашки вăхăтра ĕнесене ăратлăлантарса пыма пуçларăмăр. Пирĕн ĕнесене хупма вите те пулман. Колхоз вăйлăланса пынă май, епĕр ĕнесене валђи зоотехникă кăтартăвĕ тăрăх пысăк та çутă вите турăмăр. Ĕнесене йуратса пăхрăмăр.

Фермă çуллен пысăк тупăш пама пуçларĕ. 1936 çулта фермăран 11 пин, 1937 çулта 17 пин тенкĕ тупăш илтĕмĕр. 1938 çулта 22.455 тенкĕ тупăш илме палăртнă. Кăçал епĕр фермăран 6 уйăх çурăрах 15 пин тенкĕ тупăш илтĕмĕр.

Фермăри выђăхсен шучĕ те ӳссех пырать. 1936 çулта 85 ĕне пулнă. Кăçал государства планĕ тăрăх 95 ĕне пулмала пулсан, епĕр 105 пуçа çитертĕмĕр.

Колхозра фермă организациленĕ хыççăн колхозниксем хушшинче ĕнесĕрлĕхе пĕтертĕмĕр. Колхозниксене 1937 çулта 7 пăру, кăçал 5 пăру панă.

Ĕнесене тĕрĕс пăхнипе сĕт тухăçĕ те ӳссех пычĕ. 1936 çулта сăвакан 45 ĕнерен 45 пин литр, 1937 çулта 45 ĕнерен 50 пин литр сĕт илнĕ. Кăçал 42 ĕнерен 52 пин литр сĕт илме палăртнă. Ку таранччен 35 пин литр сĕт суса илнĕ.

Ĕнесене тĕрĕс пăхнипе епĕ сăвакан ĕнесем çулталăкне вăтам шутпа кашни кун 10-шар литр сĕт параççĕ. Иртнĕ çул тата „Красоңка" ĕне 2447 литр сĕт панă. Кăçал епĕр унтан ытларах илетпĕр.

Выђăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе епĕ тăрăшса ĕçленине кура мана кăçал Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйларĕç. Епĕ йаланах 1937 çулхи декабĕрĕн 11-мĕшĕнче Мускаври Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсем умĕнче халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ калаçнине асра тытса ĕçлетĕп. Халăх тăшманĕсемпе пĕр хĕрхенӳсĕр хаяррăн кĕрешсе пырса, ĕçре татах та пысăк çитĕнӳсем тăвас тĕлĕшпе чĕререн тăрăшса ĕçлетĕп. Хам ĕçленипе пĕрлех йулташсене те ĕçлеме вĕрентетĕп, ĕçре пулăшатăп. Хамăн пĕлӳлĕхе кулленех ӳстерсе пыратăп.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ
Александра Йефимăва.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Пĕччен коммуниссемпе ĕçлесси

Районри парторганизаци отчотпа суйлав нухăвĕ пулнăранпа икĕ уйăх иртрĕ. Унта тухса калакансенчен нумайĕшĕ йалсенчи пĕччен ĕçлекен коммуниссене ĕçре кирлĕ пек пулăшу парса пырасси çине хытăн кăтартса хăварчĕç. Пирĕн районра пĕччен ĕçлекен коммуниссем 14 çын çеç, вĕсем пĕтĕм районĕпе саланса пĕтнĕ, хăшĕсем район центрĕнчен 25 çухрăмра пурăнаççĕ. Пуçламĕш парторганизацисем йалсенче иккĕ анчах, çавăнпа та пĕччен коммуниссем партилĕ ĕçе колхозниксем хушшине сарас ĕçре пысăк вырăн йышăнаççĕ.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйланă вăхăтра пĕччен ĕçлекен коммуниссем райком хушăвĕсене пурнăçлассишĕн аван тăрăшрĕç, нумайĕшĕ суйлав комиссисенче ĕçлерĕç. Сăмахран, килхуçи хĕрарăмĕ коммунискă Иванова П. Хурамалри суйлав участкинче суйлав комиссин председателĕн заместителĕнче лайăх ĕçлеме пултарнине кăтартрĕ. Çавăн пекех Иванова Клавдийа, Петухова йулташсем те суйлавра вирлĕ ĕçлесе, массăпа ĕçлеме хăнăху илчĕç. Халђ Петухова йулташ Калинин йачĕпе тăракан колхоз председателĕн заместителĕнче ĕçлет.

Суйлав вăхăтĕнче политикăлă-массăлă ĕçĕн опытне уйа куçартăмăр. Халĕ агитаторсем уйра ĕçлеççĕ. Стаханăвла йухăма пуçарса пыраççĕ. Анчах та ку ĕçе çителĕклĕ организациленĕ тесе калама çук-ха.

Йулашки вăхăтра коммуниссене районри ответлă вырăнсене лартрăмăр. Сăмахран, колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ Сидăрăв йулташа районти çулйĕр пайĕн пуçлăхне лартнă. С. З. Бурмистрăвăна районти архив пуçлăхĕ тунă, Воронцов учителе Буински посолкăри туллимар вăтам шкул директăрне лартнă, Иванова К. йулташа районти перекет кассин заведуйушчийĕ пулма палăртнă. Пĕччен коммуниссен политикăлă пĕлĕвне хăпартассипе епĕр çителĕклех ĕçлемен-ха. Смолин С. П., Иванова Е. И. пĕччен ĕçлекен коммуниссем хăйсен политикăлă пĕлӳне ӳстерес тĕлĕшпе ним те тумаççĕ. Вĕсем парти ĕçĕнчен уйăрăлса кайнă. Парти райкомĕ ку йулташсене вăхăтра пулăшу паман.

Райком инструкторĕсем Маркийанăв тата Родзйанăв йулташсем пĕччен коммуниссене ĕçре кирлĕ пек пулăшу памаççĕ. Пĕччен коммуниссене райком сайра хутра çеç пуха калаçать. Малашнехи ĕçре вĕсене час-часах пухса мĕнле ĕçлемели çинчен ăнлантарма тăрăшатпăр. Кунта асăннă çитменлĕхсене пĕтеретпĕр.

ПСК(б)П Йĕпреç райком çекретарĕ
МЕДНИКАВ.

Комсомолĕц-депутатсем ĕçре

ССРС, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă вăхăтра Тутаркас районĕнче 300 комсомолĕц участкăри суйлав комиссисенче, 440 комсомолĕц агитаторсем, доверĕннăйсем пулса ĕçлерĕç. Тутаркас районĕнчи комсомол комитечĕ çак активиссенчен 52 комсомолĕца парти ретне кĕме рекомендаци панă. Халĕ вĕсенчен 20-шне парти ретне илсе, парти докумĕнчĕсене панă.

Суйлав вăхăтĕнче палăрнă активис-комсомолĕцсене 70 çынна йертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме лартнă. Комсомол комитечĕн çекретарĕ пулса ĕçленĕ Ксенийа Бычкова йулташа Атапай йалсовет председателне суйласа лартнă. Вăл тăрăшса ĕçленипе хăйĕн йалсоветне районра малти вырăна кăларчĕ. Халĕ ăна парти ретне илнĕ. Суйлав вăхăтĕнче Чăваш АССР Верховнăй Совет депутатне суйланă.

Чемей йалсоветĕнчи „Страж революции" колхоз çумĕнчи комсомол комитечĕн çекретарĕ В. Данилăв йулташ комсомол ĕçне йуратса ĕçлет. Колхозра вăйлă тырпул тăвассишĕн тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обчалă ĕçсене активлă хутшăннăшăн правительства 1936 çулта ăна Ĕç Йалав ордĕнне парса парнеленĕ. Суйлав вăхăтĕнче Чăваш АССР Верховнăй Совет депутатне суйланă. Парти ретне илнĕ.

А. Табаков комсомолĕц райçутĕçпайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Евтихий Андрейĕв райçĕрĕçпайĕн пуçлăхĕн замеçтителĕ пулса ĕçлет. Малтан вăл колхоз председателĕ пулнă.

Н. Йемелйанăв.

Комсомол 20 çул тултарнине уйавлама хатĕрленетпĕр

Комсомол организацийĕ 20 çул тултарнă тĕле Елĕк райкомĕн ку таранччен пуçламĕш комсомол организаци пулман 21 колхозра пуçламĕш организацисем тума йышăнчĕ. Йубилей йачĕпе йатарласа велочупу организацилетпĕр. Халђ колхозсенчи комсомол организацисенче, Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автосаватри стаханăвĕцсем пĕтĕм Сойузри çамрăксене комсомол 20 çул тултарнине кĕтсе илесси пирки чĕнсе каланине сӳтсе йаваççĕ.

Ийулĕн 14-мĕшĕнче Йаргунушкĕнчи организацинчи комсомолĕцсем çамрăксемпе пĕрле пуху туса автосаватри çамрăк стаханăвĕцсен чĕнĕвне сӳтсе-йаврĕç. Çамрăксем чĕнĕве ырласа, хăйсем çине пысăк обйазательствăсем илчĕç. Парти членĕ Майорăв йалсоветĕнче агитаципе массăлă ĕçе анлăн сарса йарса, тырпула лайăх пуçтарса кĕме, шкул строительствине вăхăтра пĕтерме, çĕнĕ вĕренӳ çулне пысăк пахалăхпа кĕтсе илме пулчĕ. Вылийĕва трахçестра йалсоветĕнчи трахомлă çынсене сыватса çитерме шутлать.

В. Йефремăв.

Йем. Йарославский

Партин иккĕмĕш сйесĕ вăтăр пилĕк çул тултарни

Российăри социал-демократилле рабочи партин иккĕмĕш сйесĕ (Брӳсель—Лондон, 1903 ç. ийулĕн 30-мĕшĕ—августăн 23-мĕш) организацилле рабочи йухăмăн историйĕнче, вырăс революцийĕн историйĕнче калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. II-мĕш сйесра Российăри социал-демократилле парти пулса кайнă. Çав тапхăрта социалисăм историне большевиксем текен йатпа кĕнĕ революцилле марксиссен чи чаплă ушкăнĕ Ленин тавра пĕрлешсе çирĕпленнĕ. Çак факт коммунисла партин историйĕнче, пĕтĕм тĕнчери революцилле йухăмĕн историйĕнче пит паллă пахă ĕç пулса йулчĕ.

Партин II-мĕш сйесĕ капиталисăм хăйĕн йулашки стадине—империалисăма—куçнă май пĕтĕм тĕнчери рабочи йухăмăн аталанăвĕнче улшăну пулнă лару-тăрура, Российăра революцилле йухăм ӳссе пынă тата вырăс рабочи йухăмĕ пĕтĕм тĕнчери революцилле пролетариатăн авангарĕ пулса пынă лару-тăрура пулса иртнĕ.

XX-мĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕ тĕлне рабочи йухăм çулĕрĕх пусăма çĕкленнĕ. 1900 çулти майăн 1-мĕшĕнче Харьковри 10 пин рабочи „8 сехетлĕ ĕç кунĕ тата политикăлă ирĕклĕх" текен революцилле лозунгсемпе демонстрацийе тухнă. 1901 çулта Закавказйере Тифлисри темиçе пин рабочисем Сталин йулташ йертсе пынипе майăн пĕррремĕш праçникне паттăррăн ирттереççĕ. 1901 çулта Петербургри Обухăв савăтĕнчи рабочисен майăн пĕррремĕшĕнчи стачки полицийе жандармсене хирĕç кĕçпăшаллă çапăçу пулса кайать. 1901—1902 çулсем çĕршывра политикăлă демонстрацисем ӳснипе палăрса тăнă.

Рабочи класăн политикăлă выступленийĕсем хресченсен революцилле йухăмĕ çине те саралнă. 1902 çулта Йевропăри Российăра хресченсем помещиксене тата патша влаçне хирĕç 340 хут тухнă пулнă. Çĕршыври опозицилле елементсем хушшинче те пăлăрмаллах хускану пулнă—студентсем, земский деятелсем т. ыт. те революцилле выступленисем тунисем пулнă.

Рабочи йухăм никама пăхăнманлăхне сыхласа хăвармала тата çирĕплетмеле пулнă. Çакна рабочи класăн паттăр революцилле партийĕ кăна тума пултарнă. Анчах рабочи класăн XX-мĕш ĕмĕр пуçланнă тĕле пĕр программăлă, уççăн палăрса тăракан принципсемлĕ партийĕ пулман ха.

1900 çулти февралĕн 11-мĕшĕнче Ленинăн Çĕпĕрти ссылкăра пурăнмали срукĕ тухнă. Вăл ссылкăран кайнă вăхăтра, унăн революцилле марксисăмăн çирĕп никĕсĕ çинче пролетарилле парти тăвассишĕн кĕрешме конкретлă план хатĕр пулнă. Çав тĕллĕве ĕçе кĕртмели чи пахă мел пĕтĕм вырăссен политикăлă хаçатне организацилесси пулать, тесе шутланă Ленин. Çавнашкал хаçата тăвассишĕн Ленин çине тăрса ĕçлеме тытăннă.

1900 çулти декабĕр уйăхĕнче „Искра" хаçатăн пĕррремĕш номерĕ тухнă. Унпа пĕр вăхăтрах „Заря" журнал та тухнă.

Ленин „Искра" хаçатăн организаторĕ, ăна тăвакан, чунĕ пулнă. Ленин „Искра" хаçат йачĕпе Российăри вырăнти организацисемпе çырусем çӳретнĕ. Ленин „Искра" хаçатра тата „Заря" журналра пичетленнĕ хăйĕн питех те нумай статйисенче, „Что делать?" йатлă питĕ чаплă кĕнекере тата „Искра" хаçат тухса тăнă тапхăрти хăйĕн ытти ĕçĕсенче рабочи клас партин программи, стратеги, тактики тата партийе организацилесси çинчен тата ыйтусене пĕрне те ответ памасăр хăварман.

Ленинла „Искра" хăйĕн умне рабочи класăн партине туса хурас задачă лартнă. Çакна тумашкăн РСДРП II-мĕш сйесне хатĕрленĕ. Анчах сйеса пухма, оппортуниссене аркатса тăкмала пулнă, вырăнсенче, Российăра, революцилле социал-демократилле организацисем тумала пулнă, социал-демократин идейăлă тата организацилле пĕрлĕхне туса çирĕплетмеле пулнă. Ак мĕншĕн ĕнтĕ Ленин „Искра" хаçатра малти черетре тăракан задачăна çакăн пек лартнă:

„Пĕрлешиччен малтан, тата пĕрлешмелле пулсан малтан пирĕн татăклăн тата чăннипех уйăрăлма кирлĕ", 1) тенĕ.

Пуринчен малтан економисăмран—пĕтĕм тĕнчери оппортунисăмăн çак вырăс ăрасналăхĕччен уйăрăлмала пулнă. 1899 çулта нимĕç оппортунисчĕ Бернштейн хăйĕн „Предпосылки социализма" йатлă кĕнекине кăларса, революцилле марксисăма хирĕç вăрçă пуçарса йанă. Çав вăхăт тĕлнех Франци социалисчĕ Мильеран стачка тăвакан рабочисене персе пăрахакан Франци буржуалă правительствине кĕрет. Ленинла „Искра" пĕтĕм тĕнчери оппортунисăма хирĕç, революцилле марксисăмăн кĕрешӳ йалавне çӳле çĕкленĕ.

Марксисла теорин тасалăхĕшĕн кĕрешсе пырса, ревизиониссене тата вĕсен вырăс ăрасналăхне—економиссене тăрă шыв çине кăларса пырса, Ленин çапла вĕрентнĕ:

„Революцилле теорисĕр революцилле йухăм та пулма пултараймасть", „... малта пыракан кĕрешӳ ролне ĕçе кĕртме малта пыракан теорипе йертсе пыракан парти кăна пултарать"2).

Ленин Российăри социал-демократишĕн теори пĕлтерĕшĕ виçĕ сăлтавсем пирки вăйланнине çирĕппĕн кăтартса панă: пĕррремĕшĕ, Российăри социал-демократилле парти тин пулса пынăран тата вăл партине революцилле çул çинчен пăрма тăрăшакан оппортуниссене çапса хуçайман пулнăран; иккĕмĕшĕ, социал-демократилле йухăм чăнсипе пĕтĕм тĕнчери йухăм пулса тăрать, çавăнпа та чăмăртанса пыракан партин нацилле оппортунисăма хирĕç çеç мар, çавнашкалах пĕтĕм тĕнчери оппортунисăма хирĕç те кĕрешсе пымала пулнăран; виççĕмĕшĕ, вырăс социал-демократин нацилле задачисем тĕнчере пĕр социалисла парти умĕнче те тăман задачăсем пулса тăнăран.

Економиссем социал-демократин политикăлă задачисене пĕчĕклетнĕ. Вĕсем тред-йунионисла, буржуалă политикăна тытма вĕренсе пынă, рабочи класăн задачине пĕчĕклетнĕ, пуç пулса тăракан класçенчен пĕчĕк уступкăсем тилмĕрсе илнипех çителĕклĕ тесе шутланă.

Ленин рабочи класа халăх революцийĕн çулпуçĕ пулса тăма вĕрентсе пынă, социал-демократа тред-йунионăн çекретарĕ пулса тăма мар, кирек мĕнле пусмăрлани çине, вăл хуть мĕнле классене е сийсене тивсен те, çавăрăнса пăхма пĕлекен халăх трибунĕ пулма вĕрентсе пынă.

Економиссем пролетариатăн политикăлă задачисене пĕчĕклетсе пыни социал-демократин организацилле задачисене пĕчĕклетнипе тачă çыхăнса тăнă. Економиссем кустарничествăна, сапаланчăклăха, местничествăна принцип туса хунă, хӳтĕленĕ. Ленинла „Искра" хăйĕн умне кĕрешме пултаракан паттăр парти, централизацилле парти, професçилле революционерсенчен тăракан, рабочи класăн тата унăн мĕн пур организацийĕсен кĕрешĕвне пĕрлештерме тата унăн пуçĕнче тăрса йертсе пыма пултаракан вăрттăн ĕçлекен организаци тăвас задачă лартнă. „Парăр пире,—çырнă Ленин,—революционерсен организацине—вара епĕр Российăна тепĕр май çаврăпăр3).

Массăсене патша йĕркине хирĕç, помещиксемпе капиталиссене хирĕç çапăçăва илсе кайма пултаракан çĕнĕ сăнарлă парти тăвас ĕçре Ленинăн „Что делать?" кĕнеки, тата Сталин йулташăн „Вскользь о партийных разногласиях" йатлă брошӳри, кăшт кайарах Закавказире тухнăскер, Ленин кĕнекипе пĕр шухăшлăскер пит пысăк вырăн йышăнса тăнă. Большевизмăн никĕсне хывакансен çак икĕ кĕнеки те „сапаланнин, салăннин, сулăнакаинин тапхăрне" пĕтерме пулăшнă. Çак тапхăра Ленин тата пĕчĕк ачалăх халăх тапхăрĕ тенĕ. Çапăçу хĕрсе пынă çĕрте рабочи йухăм ӳссе çитĕннĕ, революцилле рабочисен малта пыракан сийĕ, массăсен çулпуçĕсем, пролетарилле професçилле-революционерсем ӳссе çирĕпленнĕ.

Професçилле революционер—вăл революци ĕçне хăйĕн пĕтĕм пурнăçне паракан, революцийе хăйĕн професçийĕ туса хуракан. Профессионал-революционерсен çулпуçĕсем Ленинпа Сталин пулса тăнă. Чи пысăк профессионал-революционерсем пирĕн партине тăвакансем, Ленинпа Сталинăн соратникĕсем, Йа. М. Свердлов, Иннокентий Дубровинский, Виктор Курнатовский, Владимир Кецховели, Александр Цулукидзе, С. М. Кирăв, В. В. Куйбышев, Ф. Е. Дзержинский, Иван Бабушкин—парти ĕçĕшĕн, коммунисăм ĕçĕшĕн хастарлă тапаттăрăн кĕрешекенсем тата ыттисем те нумай пулнă.

Çĕнĕ сăнарлă парти туса,—унăн тĕп никĕсĕ профессионал-революционерсем пулнă,—Ленин çапла çырнă: пулас çĕнĕ тапхăр „воинствуйущи марксисăма тĕреклетесси патне илсе пырĕ, оппортуниссен кайра пыракансем вырăннечи революцилле класăн чăн-чăн малта пыракан отрйачĕ тухĕ"4).

Ленин „Искра" хаçатра тата „Что делать?" кĕнекере економиссене идейă тĕлĕшпе пуçĕпех çапса çĕмĕрет. Кайран Сталин йулташ çапла кăтартса панă:

„Кивĕ „Искра" кĕрешни тата Ленин „Что делать?" йатлă брошӳрăра „хвостизм" (хӳрере ырассин) теорине вирлĕн критиклени „економисăм" текен йухăма çĕмĕрсе тăкнă кăна мар, тата вырăс рабочи класĕн чăн-чăн революцилле йухăмĕн теори[illegible] кĕсне те хывса панă"5).

Рабочисемпе хресченсен революцилле массăлă йухăмĕ [illegible]пе пĕрлех народникле интеллигенци хушшинче те хускану пулать, çакă вара политикă тĕлĕшĕнчен пĕтсе ларнă терроризăма та çĕнĕрен хускантарать. 1901 çулта çапса аркатнă народникле ушкăнсен тĕрлĕ татăкĕсенчен социал-революционерсен вак буржуалă партийĕ пулса тăнă.

Çав вăхăтра хăшпĕр вырăнсенче—Саратăвра тата Уралра—социал-демократсемпе социалис-рево-

1) В. И. Ленин. Собр. соч. т. IV, стр. 39—40.

2) В. И. Ленин. Собр. соч. т. IV, стр. 380.

3) В. И. Ленин. Собр. соч. т. IV, стр. 458.

4) В. И. Ленин. Собр. соч. т. IV, стр. 391.

5) И. Сталин, „Вопросы ленинизма", стр. 14, 10-е изд.

КОЛХОЗ УЙХИРĔСЕНЧЕ

„Хĕрлĕ Сормăвă" колхозра

Тутаркас районĕ тăрăх иртнĕ чух, пиççе çитнĕ çӳлĕ те çăра ыраш хирĕсем кăмăла çĕклентереççĕ. Анчах вĕсене нумай çĕрте жнейкăсем те, çурласем те выреа тĕртенменни, йе Калайкасси йалĕнчи „Марксист" колхозри пек йатне туса тават-пилĕк тĕм выреа хуни, тутаркассем тырă вырас ĕçе вай-шайла хатĕрленнийне катартаççĕ.

Оринкири „Хĕрле Сормăвă" колхоз хăйен ырă ĕçесемпе чăваш çĕршыве тарăх пĕрре кăна кĕрлемен, хăйен ĕçченлехĕпе колхоз производстви чăн-чăнах мухтавлă пулмаллине кăтартнă. Уйхирсене вичĕ бригадă та тухнă, ыраш лаптăкесем пĕр майах кĕлтене кĕрсе пыраççĕ. Менле ĕçленине 2-мĕш бригадă сăнлахĕсем катартса параççĕ.

Каçалăх умĕнче херарăмсем хăшпĕр чухне çеç партакра чаранса тăраççĕ, пер майах çурлăсем шатăрт-шатăрт туни çинçе сасси илтенет. Инçех мар жнейкă карлаттарать.

Кĕшĕлтетсе выртакан çĕнĕ кĕлтесем хушшинче культурă повозкилерать. Тутаркас районĕнчи колхозсенче те çтена хаçачĕсене тĕл пулма йавăр. Кунта повозкă çумне 2-мĕш бригадăн „Йăрансар уйхир" хаçатне çапса хунă. Ана питĕ йуратса çырнă, оригада йепле ĕçлемелли йеркисене, йепле ĕçленине кăтартнă.

Колхозниксене кантарас пирки те повозкă пысăк вырăн йышанать. Радио петем тĕнче хыпарне пĕлтерсе тăрать. Ĕç хыççăн петĕм çансурăм ĕшенет. Повозкă ăшĕнче душ пур. Тип-тикĕс хирте, шывран инçе вырăнта, ĕç хыçĕнчен колхозниксем шыва кĕреççĕ. Ӳт канать, вайхалра хытăрах ĕçлес кăмăл хăпарать. Ытти колхозсенче кун пек повозкăсем çук, анчах Тутаркас районĕнчи организацисем чăн-чăнах çанна таварса ĕçлене пулсан, вĕсем кашни колхозрах пулма пултарнă. Душ тăвасси пуç çĕмĕрмели ăсталах та ыйтмасть. Йавăç катка та тимер труба. Анчах çакă икĕ йапаларан тунă душ ĕç ăнăçлăхне хапартать.

„Хĕрлĕ Сормăвă" колхозĕнче кашни бригадăрах ăшă апат хиртех çитереççĕ.

Павлавă Варварă 2-мĕш звенона йертсе пырать. Кайра кĕлте темĕсем шарçаланса йуласçĕ. Трофимава Дарйа кунне 2,25 ĕçкунĕ туса пырать.

Перремĕш звенора Ивановă Ольгă тата Павлăва Матрена питĕ аван ĕçлесе пыраççĕ. Икĕ звено хушшинче ăмăрту пырать, ăна кашни кунах тĕрĕслесе пыраççĕ.

Иккĕмĕш звенона йертсе пыракан Павлăвă Варварă:

— Социалисăмлă ăмăртăва епĕр кĕлтесен шучĕпе виçетпĕр,—тет

„Хĕрле Сормовă" колхоз лайăх ĕçлет пулсан та, колхозниксен аллинчи çурласене кăна шанчăк пани колхоз йатне партакçă илемрен кăларать. Колхозра пĕтĕмпе те икĕ жнейкă, вĕсенчен пĕри кăна ĕçре, тепри ийулĕн 22-мĕшĕнче каçпа та ĕçе тухманччĕ.

Çурласем те аван, анчах машинăсем пурте хире тухса ĕçре шавлани колхоз илемне кӳрĕччĕ.

У. Й.

ÇĔÇÇИ ЙАЧĔПЕ

Йепрес районĕнчи „Çисĕм" колхоз членĕсем ЧАССР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çеççийе уçалнă йатпа вирлен ĕçлеме тытăнчĕç. Ийулен 23-мĕш тĕлне колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче çĕнĕ займа 2.300 тенкелĕх сарнă. Ийулăн 27-мĕш тĕлне колхозниксем займшăн укçа пĕтĕмпех тӳлесе татса çĕнĕ заем облигацисене алла илчĕç.

Колхоз ыраш, кĕрхи тулă вырса петерне. Пурĕ 96 гектар ытларах ыраш, 10 гектар кĕрхи тулă вырнă. Ийулен 27-мĕшĕнче парса пуçтараççĕ, авăн çапаççĕ. Ийулĕн 28-мĕшĕнче колхоз государствăна ыраш парса тататъ.

А. Симбирский.
З. Маргинăв.

Ăмăртура мала тухнисем

Тутаркас. Атапай йалсоветĕнчи „Херле йалав" колхозпа Кашмаш йалсоветĕнчи „Свобода" колхоз амартса ĕçлеççĕ. Икĕ колхозе те районри ытти колхозсенчен малта пыраççĕ. „Свобода" колхозри 6-ш бригадă Чăваш АСС Республикин Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çеççийе уçалнă тĕле ыраш вырса пĕтерсе, государствăна тыра пама авăн çапма тытăнчĕ. Ийулĕн 25-мĕшĕнче колхоз çĕлĕ вырма тухрĕ.

Икĕ колхозăн ăмăртăвĕнче уйрăманах Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ К. А. Бычкова йулташ председатĕл пулса ĕçлекен йалсоветри „Хĕрле йалав" колхоз мала тухса пырать. Ку колхоз Бычковă депутат Верховнăй Советăн çеççине кайнă куна ыраш вырса петерчĕ. Ийулен 25-мĕшĕнче 45 центнер тырă государствăна леççе пачĕ.

С. Горланăв.

Жнейкăсемпе ĕçлемеççĕ

Маťшӳри (Шăхасан р.) „Çамрăк колхозник" колхоз тырă вырма хатĕрленмесĕр тухрĕ. Малтанхи кунах пысăк çитменлĕхсем палăрчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен ĕçесене тĕплен пĕлмесĕр тăчĕç. Колхозра ĕç планне туман. Колхозниксем хушшинче ĕç дисциплини начар. Тыра вырма колхозниксем кайа йулса тухаççĕ.

Колхоз 5 кун хушши ыраш вырать. Анчах жнейкăсем уйа тухса курман. Жнейкăсем пурĕ 3. Вĕсем пурте ĕçлеме йурахсăр, йусаман. Колхоз председателĕ Иванов йулташран:—мĕншĕн жнейкăсемпе ĕçлеместĕр?—тесе ыйтсан,—Иртнĕ çулта çурлапа вырса пĕтертемĕр, каçал та жнейкăсăрах вырса пĕтерĕпĕр,—тесе ответлет. Çак сийенлĕ шухăша халех пĕтерни кирлĕ.

„Çамрăк колхозник" колхозăн ыраш вырнă çĕрти çитменлĕхсене сургрисене вырнă çĕрте тумалла мар. Жнейкăсене халех йусаса ĕçлеме тытăнмала.

Н. Й.

Малта пыракан комбайнерсем

ПАТĂРЙЕЛ, ийулĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Комбайнер Шатерăв йулташ хăйне çирĕплетсе панă комбайнпа ийулĕн 23-мĕшĕнче—18 гектар, 24-мĕшĕнче—25 гектар ыраш вырнă. Çапла Шатерав йулташ пĕр кун хушшинче 88 тенкĕ ытла ĕçлесе илнĕ.

Шатерăв йулташа кулленхи ĕç нормине ытлашшипех тултарса пынăшăн МТС дирекцийĕ 200 тенкĕ укçа парса премилерĕ.

Çавнашкалах Ксенийа Шашкинă комбайнеркă та кашни куллен 20 гектара йахăн вырса, пĕр кун хушшинче 70 тенкĕ ытларах ĕçлесе илнĕ.

Н. Пушкин.

** ÇĔРПӲ районĕнчи Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз уйхирĕнче ĕçлекен комбайнер Коночкин йулташ хăйне çирĕплетсе пана комбайнпа пĕр кун хушшинче 27 гектар ыраш вырнă.

Çак хушăрах ытти комбайнерсем кулленхи ĕç нормине тултарса пыраймаççĕ. Шуртавăш колхозне пынă комбайна лайăх йусаман пирки, 2 кун ĕçлесенех ĕçлеме чаранна.

Ĕмпĕрт Тӳса, Тĕнсĕр колхозĕсенче те комбайнсем ахалех лараççĕ.

МТС-ăн монтĕрĕсем—Хмельовпа Трофимăв йулташсем машинăсене лайăх йусасшăн тăрăшмаççĕ.

В. Васильйĕв.

Жнейкăсене ĕçсĕр лартаççĕ

Вăрманкассинчи „Самольот" колхоз (Вăрнар р.) тырпулсене пуçтарса кĕртме хатĕрленмесерех тухрĕ. Колхозăн пурĕ 6 жнейкă пулсан, пайанхи куна пĕр жнейкă çеç ĕçлет. Ытти 5 жнейкине йусаман та.

Колхозниксем хушшинче культурлă-массăлă ĕç те начар. Бригадăсенче çтена хаçачĕ кăларассине тата хаçат-журналсем вуласа парассине те организацилемен. Вулав çурчĕн пуçлăхĕ Кузнецов йулташ уйа тухса та курăнмасть. Çавнашкалах, пахалăх комиссийĕн членĕсем те уйа тухса ĕç пахалăхне тĕрĕслемеççĕ, пучахсем нумай тăкăнса йулаççĕ.

А. Майорăв.

1939 çулти Пĕтĕм Сойузри халăх переписĕ çинчен

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени

ССР Сойуз Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать.

1. 1939 çулти йанварĕн 17-мĕш кунĕнче Пĕтĕм Сойузри халăх переписне иртерес.

2. Переписе ССР Сойузĕн пĕтĕм территоринче пĕр вăхăтра туса иртерес, çав территоринче пулакан совет гражданĕсене тата йут çĕршывсен подданнăйĕсене пурне те переписе кĕртес.

3. Куç умĕнче пулакан халăха, вăхатлăха пурăнма пынисене те кĕртсе, переписре çырса тухмала тăвас.

Кунсăр пуçне, Инструкци кăтартса пана йерке тарăх, йалан пурăнакан, вырăнтан вăхатлăха урăх çĕре тухса кайнисене те çыраççĕ.

1939 çулти йанварĕн 17-мĕшĕнче перепис иртерне кун çул çинче: инçете каймa тухнa пуйассенче, тинессенчи тата йухăншывсенчи парахутсем çинче, вакзалсемпе станцăсенче пулакан халăха уйрăм йеркепе çыраççĕ.

4. Перепис листин бланкне тата ăна тултармалли Инструкцине çирĕплетес.

5. Переписе йатарласа хатĕрленĕ счотчиксем хуласенче 1939 çулти йанварĕн 17-мĕшпе 23-мĕш хушшинче тата йалсенче 1939 çулти йанварĕн 17-мĕшпе 26-мĕш хушшинче иртермеле тăвас.

6. Счотчиксен ĕçне йертсе пыма йатарласа хатĕрленĕ инструктăр-контрольорсем уйармала. Вĕсем çине халаха тĕрĕс шутласа тухнине тĕрĕслес ĕçе хурас, çакна вĕсем счотчикпе перле счотчике уйарса пана участкри мĕн пур çуртсене кĕрсе тĕрĕслеççе. Йалсенче халаха тĕрĕс шутласа тухнине тĕрĕслес ĕçе, кунсăр пуçне, йал совечĕсен уполномоченнăйĕсене йăвăçтармала.

Хуласенче халаха тĕрĕс шутласа тухнине 1939 çулти йанварĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 2-мĕшне çитиччен тата йалсенче—1939 çулти йанварĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 5-мĕшне çитиччен тĕрĕслесе тухмала.

7. Хуласемпе районсенче переписе организацилессипе ăна иртерессине тӳрех йертсе пырас ĕçе халăх-хуçалăх учочĕн хуласенчи тата районсенчи инспектăрĕсем çине хурас.

Переписе хатĕрленĕ тата ăна иртерне вăхăтра инспектăра пулăшса перепис йенĕпе ĕçлеме йатарласа помощник уйăрса памала.

8. Халăх-хуçалăх учочĕн хуласемпе районсенчи инспектурисем çумĕнче перепис пайĕсем организацилемеле (район пуçне виççĕрен пуçласа пиллĕк таран).

9. Счотчиксемпе инструктăр-контрольорсен, перепис пайĕсен пуçлăхĕсен, вĕсен помощникĕсен тата халăх-хуçалăх учочĕн хуласемпе районсенчи инспектăрĕсен помощникĕсен кадрĕсене пухса çитерме—Сойузлă тата автономлă республикăсен Халăх Комиссарĕсен Совечĕсене, крайсенчи тата облаçсенчи ĕçтăвакан комитетсене Халăх-хуçалăх учочĕн Тĕп Управлени органĕсемпе перле хушса тӳленĕ условисемпе (хăйсем ĕçленĕ вырăнта ĕçукçи илсе тăнисĕр пуçне), шкулсенчи, совет учрежденисенчи тата суту-илӳ организацисенчи работникĕсене, аслă верену заведенийĕсенче тата вăтам шкулсенче асларах классенче веренекенсене, предприйатисенчи, совхозсенчи, колхозсенчи т. ыт. учотпа счот тата контора йенĕпе ĕçлекен çынсене йăвăçтарма хушас.

10. Халăх-хуçалăх учочĕн Тĕп Управленин вырăнти органĕсем тăратнă тăрăх, районсенчи ĕçтăвакан комитетсем йе хула совечĕсем хăйсем патĕнче кашни счотчике тата инструктăр-контрольора уйрăман çирĕплетмеле тăвас.

Счотчиксемпе инструктăр-контрольорсене суйласа тупас тата вĕсене районсенчи ĕçтăвакан комитетсемпе хула совечĕсем уйрăман çирĕплетес ĕçе 1938 çулти августăн 1-мĕшĕнче тытăнса октаберĕн 1-мĕш тĕлне туса петермеле.

11. Пĕтĕм Сойузри халăх переписĕ йенĕпе ĕçлекен мĕн пур счотчиксемпе инструктăр-контрольорсене йатарласа удостоверенисем памала тăвас, вăл удостоверенисем çине районри ĕçтăвакан комитет йе хула совет председателĕ тата халăх-хуçалăх учочĕн районри (хулари) инспекторĕ алă пусмала.

Килĕрен çӳресе ыйтса тухнă чухне перепис работникĕсен халăх ыйтнă тăрăх хăйсен удостоверенийĕсене кăтартмала.

12. Халăх-хуçалăх учочĕн республикăсенчи, крайсенчи тата облаçсенчи управленийĕсем тăратнă тăрăх, облаçсене пайланман сойузлă республикăсемпе автономлă республикăсен Халăх Комиссарĕсен Совечĕсем, крайсемпе облаçсен ĕçтăвакан комитечĕсем халăх-хуçалăх учочĕн хуласемпе районсенчи инспекторĕсен помощникĕсене тата перепис пайĕсен пуçлăхĕсене уйрăман çирĕплетмеле тăвас.

Халăх-хуçалăх учочĕн хуласемпе районсенчи инспекторĕсен помощникĕсене тата перепис пайĕсен пуçлăхĕсене суйласа тупса çирĕплетес ĕçе 1938 çулти августăн 1-мĕшĕнче тытăнса, çентаберĕн 15-мĕш тĕлне туса петермеле.

Перепис пайĕсен пуçлăхĕсен помощникĕсене районсенчи ĕçтăвакан комитетсемпе хула совечĕсем çирĕплетмеле тăвас. Вĕсене суйласа тупса çирĕплетес ĕçе 1938 çулти августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса октаберĕн 1-мĕш тĕлне туса петермеле.

13. ССР Сойузĕ тăрăх перепис иртерессишĕн ответлăха ССРС Государства План Комиссийĕ çумĕнчи Халăх-хуçалăх учочĕн Тĕп Управлени начальникĕ çине хурас, вăл переписе йертсе пырассине тӳрремĕнех пурнăçа кĕртсе пырать.

Переписе хатĕрлеме тата ăна иртерме, перепис результачĕсене паларса тухассипе ĕçлеме ун çумĕнче 1939 çулти Пĕтĕм Сойузри халăх переписĕн Бӳроне организацилес.

Сойузлă тата автономлă республикăсенче, крайсемпе облаçсенче перепис иртерессишĕн ответлăха халăх-хуçалăх учочĕн республикăсенчи, крайсемпе облаçсенчи управленийĕсен начальникĕсем çине хурас. Вĕсем çумĕнче тата çавăн пекех пысăк хуласенче переписе хатĕрленĕ тата ăна иртерме халăх переписĕн Бӳроне организацилес.

14. Переписа иртерес тĕлĕшпе тунă йеркене пăсса айапа кĕне, çавăн пекех тата перепис вăхатĕнче уйрăм çынсем çинчен пухнă сведенисене çынна пĕлтерне перепис работникĕсене суд умĕнче ответ тыттармала тăвас.

15. Сведенисем памасăр тытăнса таракан граждăнсене йе йурийĕх тĕрĕс мар сведенисем паракан граждансене—суд умĕнче ответ тыттармала.

ССР Сойуз Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ В. МОЛАТĂВ.

ССР Сойуз Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕ Н. ПЕТРУНИЧĔВ.

Мускав, Кремль. 1938 çулти ийулĕн 26-мĕш.

Тупăшсене пытарса хăварнă

ИЕЛЧĔК Тăрмăш йалсоветĕнче колхоз-иксемпе йединоличник хуçалăхĕсем çине вĕсен çулталăкри çĕр ĕçĕнчен, выльăх-чĕрлĕхрен тата ытти çĕртен кĕнĕ тупăшсене хисепе илсе йалхуçалăх налогĕ шутласа хурас ĕç хĕрсех пырать.

Йалсоветра ĕçлекенсем йединоличник хуçалăхĕсем çулталăкра мĕн чухлĕ тупăш илнине тĕрĕс тума тăрăшаççĕ. Анчах та хăшпĕр йединоличник хуçалăхĕсем хăйсен тупăшĕсене пытарса хăварма хăтланни куранчĕ. Тупăшсене малтанлăха хисепе илсе тухнă чух, Тармăш йалĕнче пурнакан С. Чернов 413 тенкĕ, Н. Йегорăв 493 тенкĕ, Н. Колбасăв 201 тенкĕ пытарса хăварнă. Йединоличник хуçалăхĕсем ытти çĕртрен ĕçлесе илнĕ тупăшсене палăртас тĕлĕшпе кооператив тата ытти организацисем начар ĕçлесе пыраççĕ ха. Патăрйелĕнче Тăрмăш йал сыннине Васильĕв Ивана тавар турттарса панăшăн йанвар уйăхĕнче 53 тенкĕ те 15 пус укçа тӳленĕ, тесе справка панă. Тĕрĕслесе пăхсан, ку йалта ун пек хушаматлă, йатлă çын çукки палăрчĕ.

Х. Ш.

льуционерсен пĕрлешӳлĕ организацийĕсене тунисем уйрăмах хăрушă пулнă. Саратăвра çавнашкал принципсăр пĕрлешӳсем тăвакансенчен пĕри Рыкăв пулнă, вăл кайарахри вăхăтра партире контрреволюцилле сылтăм сулăнчăк организаторĕ, сарлакăшпе социалисăмлă наступлени тунă тапхăрта—халăх тăшманĕ, фашисăмăн сутăнчăк агенчĕ пулса тăнă.

Ленин хăй критикин пĕтĕм çивĕчлĕхĕпе народниксен истори тăвакан „геройсем" çинчен тата революцинче пассивлă хутшăнакан „халăх" çинчен калакан мĕскĕн те политика тĕлĕшĕпе сийенлĕ теорине тытса пыраканĕ пулса тăракан ессерла террорисăма хирĕç тăрать.

Ленин „Революционный авантюризм", „Почему социал-демократия должна об'явить решительную и беспощадную войну социалистам-революционерам?" йатла статйасенче тата „Искра" хаçатра пичетленнĕ ытти статйасенче те ессерсем-авантюриссем, авалхи народничествăна ревизионисăмпа пĕрлештерекен буржуалă демократин вакбуржуалă интеллигентла фракцийĕ пулса тăнине кăтартса панă.

Революцилле марксисăмăн тăшманĕсене хирĕç çине тăрса кĕрешнипе вырăнсенче „Искра" организацийĕсем пулса пынă. Ленинла-искрăла çирĕп организаци Закавказйĕре чăмăртаннă, унăн никĕсне хываканĕ Сталин йулташ пулнă. Сталин йулташăн соратникĕсем М. Цхакая, В. Курнатовский, В. Кецховели, А. Цулукидзе пулнă. 1901 çулти нойаберĕн 11-мĕшĕнче парти конференцийĕнче Тифлисра ленинла-искрăла комитет тунă, унăн пуçĕнче Сталин йулташ тăнă. Çак çулăн декаберĕн 31-мĕшĕнче Сталин йулташ пуçарнипе тата вăл йертсе пынипе Батумри социал-демократилле организаци йĕркеленет, Батумра ленинла-искрăла комитет тăваççĕ.

1901 çулта Сталин йулташ пулăшнипе В. Кецховели Бакура вăрттăн типографи организацилет. Çав типографинче 1901 çулти çентабĕр уйăхĕнче Тифлисри ленинла-искрăла организацин органĕ—„Брдзола" („Борьба") йатлă хаçатăн пĕрремĕш номĕрне кăларнă.

Искравецсен ĕçне пула Российăра „Искра" çумне Мускав, Чулхула, Тверь унтан Петербург комитечĕсем тата ытти комитетсем те хутшăннă. „Искра", унăн организацилĕ планĕ пысăк çĕнтерӳ тунă. Сталин йулташ кăтартса панă пек, „çав план çĕнтерни тачă пĕтĕçнĕ тата çирĕп коммунисла партин никĕсне хывре, унпа пĕртан партийе тĕнче пĕлмест" 6).

* * *

1901 çулхине çулах Ленинпа „Искра" редакцийĕн ытти членĕсем хушшинче либераллă буржуази çине мĕнле пăхас ыйту тăрăх пысăк хирĕçлĕхсем пурри палăрнă. Буржуази органĕн „Освобождение" редакторĕ, ĕлĕкхи легальнăй марксис—кайран либерал пулнă П. Струве патша правительстви умĕнче хырăмпах шуса çӳренине Ленин тăрă шыв çине кăларнă. Струве „Право и властное земство!" текен реформисла лозунг кăларса, ăна „Долой самодержавие!" текен революцилле лозунга хирĕç тăратнă. Ленин Струвене хирĕç „Гонители земства и Аннибалы либерализма" йатлă статйа çырса, унта вырăс либерализмне хăравçа иккенне тата унăн çемçешкелĕхне тăрă шыв çине кăларнă.

Плеханăв тата Аксельрод Ленин статйине хирĕç тăнă, вĕсем Ленина либерала шăртне хирĕç мар, шăртне май шăлма сĕннĕ. Çак хирĕçле шухăшсенче либераллă буржуази çине пăхас тĕлĕшпе икĕ тактикăн: большевикла тата меньшевикла тактикăсен тымарĕсем выртаççĕ те ĕнтĕ.

1902 çулти йанвар уйăхĕнче „Искра" редакцийĕнче программă ыйтăвĕсем тăрăх пит пысăк хирĕçӳсем пуçланса кайаççĕ.

Ленин парти программине тăвас тĕлĕшпе ĕçлеме 90-мĕш çулсен вĕçĕнчех пуçланă. Ленин программăн пройектне Петербургра тĕрмере, малтанлăха хупса лартмалли çуртра ларнă чухнех туса хатĕрленĕ пулнă. „Искра" редакцинче программăна сӳтсе йавасси пуçлансан, редакцинче ĕçлекенсенчен нумайĕшĕ, Плеханăвăн „Освобождение труда" йатлă ушкăнĕнче тăракансем, Плеханăва хӳтĕленĕ тата сӳтсе йавма Плеханăв 1901 çулăн вĕçĕнче туса хатĕрленĕ программă пройектне никĕсе хунă. Ленин 1902 çул пуçламĕшĕнче тăратнă программăн пройектне никĕсе хурас пулсан, Плеханăв уйăрлса кайассипе хăратнă. Икĕ пройекта та пĕрлештерсе килĕштерме тытăнса хăйне хăй хытă йуратакан Плеханăв йаланах хирĕççе кайнă.

Парти программин Плеханăв тăратнă пройектинче питĕ пысăк, принциплă çитменлĕхсем пуррине Ленин курнă. Вăл Плеханăвăн „академилле" программă пройекчĕ Марксăн революцилле вĕрентĕвĕн шухăшĕпе тата революцилле вырăс рабочи класĕн кĕрешӳ условийĕсемпе килĕшменнисене пурне те курнă. Вăл Плеханăвăн программа пройектне хирĕç хăйĕн пройектне тăратнă. Вăл Плеханăв тăратнă программă пройектне критикленине—критиклени вăйĕ тата пахалăхĕ йенĕпе—Маркспа Енгелс 1875 çулта Германи социал-демократин Готтăри программине критикленипе кăна танлаштарма пулать пулĕ.

Плеханăвăн йăнăшĕсем мĕнлескерсем пулнине хаклама программăн иккĕмĕш пройектинче марксисăмăн питех те паха ыйтăвĕ çинчен—пролетариат диктатури çинчен нимĕн те каламаннине асăрхатни те çителĕклĕ. Ленин çине тăрса революцилле марксисăмăн çав тĕп программăлă ыйтăвне кĕрттернĕ.

„Пролетариат диктатури кирлине йышăнни,—тесе çырнă Ленин,—Коммунисла Манифестăн положенийĕне пролетариат пĕр хăй çеç чăн-чăн революцилле клас пулса тăрать тенипе,—чи çывăх та уйăрăлми çыхăнса тăрать.7)

Плеханăвăн иккĕмĕш пройекчĕ çинчен çырнă отзывра Владимир Ильич вăл хăй теори тата политика тĕлĕшпе килĕшмен вырăнсем çинчен, вĕсене тăватă принциплă пункта пайласа пĕрлештерсе çырнă. Ленин килĕшменнисем Плеханăвăн йăнăш шухăшĕсен меньшевикла йенĕсене тата та уççăнрах, туллинрех уçса панă та ĕç уйрăм йăнăшсенче мар пулнине, унăн оппортунисла ăшчиккине ытларах палăртма пуçланă шухăшсен системинче пулнине кăтартса панă.

Плеханăв программă пройектне кĕртсе тултарнă питĕ пысăк теорилле тата тактикăлă меньшевикла йăнăшсене хирĕç Ленин кĕрешнипе, „Искра" редакцин членĕсем—Плеханăва хӳтĕлекен тата „ăна кӳрентерес мар текенсем" хирĕç тăнине пăхмасăрах, программăна чылайах лайăхлатнă. Ленин принципла килĕштермен вырăнсене шута илсе, вĕсене никĕсе хурса тӳрлетнисем чылайĕшĕ комиссинăн пройект текенине кĕнĕ.

Ленинпа Плеханăв программă çинчен тавлашнин принциплă характерĕ питех те паллă. Ленин шухăшĕсем Марксăн революцилле шухăшĕсене малалла аталантарнине палăртакан большевисăмăн принциплă, теорилле, программăлă тата тактикăлă никĕсĕ пулса тăраççĕ. Плеханăвăн программă çине пăхас шухăшсен системи никĕсĕнче вырăс меньшевисăмĕн программăлă тактикăлă шухăшсем выртнă.

II-мĕш съезд тăратнă аграрлă программăн авторĕ Ленин пулнă. Ленин аграрлă программăра кăларса тăратнă тĕп ыйту касса илнĕ çĕр таткисене, помещиксемшĕн хресченсене пусмăрламалли тата крепосничествăн йулашкийĕсене сыхласа тăмалли мел пулнăскерсене, хресченсене таврса парассишĕн кĕрешесси пулнă. Крепосничествăн йулашкийĕсене пĕтерес тĕллевпе тата йалта клас кĕрешĕвне ирĕклĕн аталантарас тĕллевпе ĕнтĕ партин касса илнĕ çĕр таткисене хресченсене таврса партарассишĕн хыта тăма кирлĕ пулнă. Анчах касса илнĕ çĕрсене хресченсене таврассине Ленин куçу тапкăрне тивĕçлĕ ĕç вырăнне, алăк вырăнне кăна шутланă: чи малтан çав алăка малалла кайма, уçă сарлака çул тăрăх вĕçне çитиччен, Российăри мĕн пур ĕçлекен рабочи халăха пĕтĕмĕшпех ирĕке каларса çитеричченех каймашкăн кĕме кирлĕ пулнă.

Ленин, тивĕçлĕ условисем пулсан, революци малалла аталанса пынă майĕпе, помещиксен мĕн пур çĕрĕсене конфискацилес тата национализацилес ыйтăва кăларса тăратма май пулать, тесе шутланă.

Ленин сĕнĕвне хирĕç „Искра" редакцинчех Плеханăв, Аксельрод тата Мартăв тăнă, вĕсем буржуаллă-демократилле революцире çĕре национализацилес ыйтăва кăларса тăратма йурамасть, тесе шутланă. Кунта татах Ленинпа редакцин ытти членĕсем хушшинче революци чи паха ыйтăвĕсенчен пĕри—хресченсем çине мĕнле пăхас ыйту тăрăх тĕрлĕ шухăшсем пурри палăртнă. Ленин ун чухнех, малтанхи революци пуçланас умĕнхи вăхăтрах рабочи партин чăн-чăн программи çĕре национализацилес ыйтăва кăларса тăратни пулать, тесе шутланă. Вăл çĕр таткисем çинчен ыйту лартни çĕре национализацилес çул çинчи малтанхи утăм кăна пулмалла, тесе шутланă. Çавнашкалах тата çĕре тӳлесе илес ыйту тăрăх та тавлашусем пынă. Ленин çĕре конфискацилес, урăхла каласан, касса илнĕ çĕр таткисене хресченсене тӳлеттермесĕрех кайала таврса парас ыйтăва тăратмала, тесе шутланă. Плеханăв касса илнĕ çĕр таткисен пĕр пайне тӳлесе илмеле тăвасшăн пулнă.

Çапла ĕнтĕ, питех те паха программăлă ыйтусем тăрăх: пролетариат диктатури çинчен, капиталисăм мĕн иккенни çинчен, рабочи класпа хресченсем хушшинчи çыхăну çинчен, либералсем çине мĕнле пăхасси çинчен, аграрлă ыйту тăрăх—„Искра" редакцинче питĕ пысăк хирĕçӳсем пулнă. Çапла ĕнтĕ Ленин çак ыйтусене парти программине большевикла лартассишĕн кĕрешни питĕ пысăк, принциплă вырăн йышăннă. Ленинăн çак мĕн пур ыйтусем тăрăх „Искра" редакцин пур членĕсене те хирĕç кĕрешмелле пулнă, редакци членĕсенчен хăшпĕрисем çеç уйрăм формулировкăсем тăрăх хăшпĕр чухне Ленина хӳтĕленĕ.

„Искра" редакцинче пĕр программăна йышăнас пирки калаçса татăлма май килнĕ, вара ăна партин II-мĕш съесне тăратнă. Анчах ку „Искра" редакцинче икĕ çулйĕр—ленинла, большевикла тата плеханăвла, меньшевикла çулйĕрсем кĕрешнĕ фактна нийепле те пытарса хăвараймасть.

Çаксенчен пуринчен те ĕнтĕ II-мĕш съесчченех революцилле марксисăмăн партин программине хуса хатĕрлес тĕлĕшпе Ленин питĕ пысăк ĕç туни уççăн курăнса тăрать.

(Малалли пулать).

6) И. Сталин. „О Ленине", стр. 5. Политиздат. 1938.

7) В. И. Ленин Собр. соч. т. V, стр. 20

А

Йапони халăхĕ вăрçăшăн мар

30 предприйати ĕçлеме чарăннă

Йапони халăхĕ Китайпа Йапони хушшинчи ĕçсен хăрушăлăхне ăнланса илет: Йапони Китайа çар йарас ĕçе васкавлă хăвăртлăхсемпе туса пырать. Йапони çĕршывĕн хуçалăхĕ йăвăрлăхра пулин те, çĕршывăн мĕнпур запасне вăрçă валли мобилизацилеççĕ.

Йапонин çар командованийĕ вăрçă сахалтан та тепĕр çул йе икĕ çул чăсăлма пултарассине тунма пултараймасть. Вăхăт иртет, анчах халăхăн пурнăçĕ нимĕн чухлĕ те лайăхланмасть, начарлансах пырать. Хресченсен пурнăçĕ ĕлĕкхи пекех калама çук йăвăр. Рабочисем пăлханаççĕ. Забастовкăсем сарăлса пыраççĕ.

Вăрçа хатĕресем тăвакан металлургин 30 предприйатинче ĕçсем чарăннă. Мĕншĕн тесен, рабочисем забастовка тăваççĕ. Влаççем хăраса ӳкнĕ, предприйати хуçисене хĕсме тытăннă. Лешсем, предприйати хуçисем, рабочисене ĕçукçи ӳстеретпĕр, анчах тепĕр уйăхсăр... пулмасть, тесе сăмах панă.

(«Льумийер» хаçатран, Париж).

Студентсемпе ученнăйсен протесĕ

Токиори университетри студентсем нумай пулмасть вăрçа хирĕç демонстраци организациленĕ. Полици темĕн пек хытă тăнă пулин те, демонстраци пулсах иртнĕ. Профессăр Мандзи Сихомарине арестленĕ, вăл йутçĕршывсен хаçачĕсенче вăрçа хирĕçле статйа пичетлесе кăларнă пулнă.

Тепĕр профессăра—Катона академи клубĕнче вăрçа хирĕçле сăмах каланăшăн çар трибуналĕн судне панă.

Вăрçа хирĕç пропагандă сарнăшăн паллă ученнăйсене тата темиçе çынна арестленĕ.

(„Дейли уоркер" хаçатран, Лондон)

Йапони çарĕнчи вăрçа хирĕçле шухăш

Йапони салтакĕсем вăрçа хирĕç тăнине епĕр кашни кунах çĕнĕрен куратпăр. Çапла Осака портĕнче Йапони салтакĕсем 7 пин çын восстани тунă. Вĕсем фронта кайма килĕшмен, „агреççине тата милитариссене тĕп тăвар" тесе лозунг кăларса тăратнă. Йапони салтакĕсен виллисем çумĕнче „хамăр тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн пирĕн çак вăрçа хирĕç восстани тумала", тесе çырнă листовкăсем тупăнаççĕ.

Вăрçа хирĕçле шухăш „шанчăксăр" чассенче çеç мар. пĕтĕм çарта пур. Цзиньанран, Таньцзинрен, Шанхайран--пур портсенчен те вăрçа кайассине хирĕç тăнă салтаксене конвойсемпе илсе пыни çинчен сведĕнисем килеççĕ. Шанхайра 4 йапонĕца арестленĕ чухне, çак хулана çар хушшинче вăрçа хирĕçле пропагандă сарма вăрçа хирĕçле лигăн 20 членĕ килни паллă пулнă. Арестленисенчен пĕри Шанхайран кăнтăр йенчи пĕр вырăнта темиçе деçаткă салтак, хăйсене фронта йарасси çинчен приказ илсенех хăйсене-хăйсем вилме пулса пĕрпĕрне хут çине çырса обйазательства панă, тесе каланă. Май уйăхĕн вĕçĕнче Нандаора 14 салтак хăйсене хăйсем вилни çинчен хыпар килнĕ. Вĕсем хăварнă çырура çапла каланă:

„Епĕр сире, китайĕцсене хирĕç вăрçасшăн мар. Пире ирексĕрлесе сире хирĕç вăрçма йараççĕ", тенĕ.

Йапони çарĕ рабочисемпе хресченсенчен тăрать. Рабочисемпе хресченсене Йапони милитарисĕсем Китай халăхне хирĕç пуçарнă вăрçă кирлĕ мар. Йапони çарĕнче милитариссене хирĕçле шухăш анлăн сарăлать, ăна сарăлма никам та чарма пултараймасть. Салтаксем хушшинче çĕнĕ ăнлану сарăлать, вăрçа тăсăлса пынă май, çак ăнлану Йапони милитарисĕсене хирĕç пит хăрушă вăй пулса тăма пултарать. Çакăн чухне Йапони халăхне чуралăха хĕссе кĕртнĕ çар çыннисене—фашиссене хирĕç массăлă, организацилĕ вăй тухса тăрать.

(„Чайна Тудей" журналран Нью-Йорк).

* * *

Халĕ Йапони салтакĕсене Китайа çĕрле çеç йараççĕ. Салтаксен чи çывăх тăванĕсене те ăсатма патне те йамаççĕ.

Йапонĕцсен çумĕнче тупакан çырусем питĕ характерлă. Нумай пулмасть Йапони льотчикне—Канатана тыткăна илнĕ пулнă. Ун кăсйинче арăмĕ йанă çырăва тупнă. Арăмĕ çав льотчикĕн тусĕ офицер хăйне фронта йарасси çинчен пĕлсенех тарса пытанма ĕлкĕрнĕ, тесе çырса пĕлтернĕ. Каната çакăн пек тарса пытанайманнишĕн кульанмала, тесе çырнă арăмĕ.

(„Дейли уоркер" хаçатран, Лондон).

Фашиссен тĕрминчен çăлса кăларнă

ССРС правительстви тунă ĕçсене пула „Смидович" пăрахут командинчи 8 морйака, Испанири пăлхавçăсен тĕрминче пулнăскерсене, фашиссен тыткăнĕнчен хăтарса кăларнă. Июлĕн 24-мĕшĕнче вĕсем пурте Париже пырса çитнĕ.

Морйаксем калама çук ывăнса, халран кайса çитнĕ санлă, тесе пĕлтереççĕ.

Париже çитсен вĕсем Сталин йулташпа Йежов йулташ йачĕпе телеграммă йанă. Телеграммăра вĕсем çапла çыраççĕ: „Фашиссен тĕрми пирĕн совет ĕçĕшĕн кĕрешес кăмăла хуçаймарĕ. Епĕр йуратнă тăван çĕршыва хаваслăн таврăнатпăр. Есĕр тӳррĕмех хăвăр тата партипе правительствă пиреншĕн тата пирĕн çемйесемшĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнăшăн чĕререн тав тăватпăр".

Йапони-Манчжури полицин провокацилĕ ĕçĕсем

ХАБАРĂВСК, июлĕн 25 мĕш. (ТАСС). Харбинран пĕлтернĕ тăрăх, Йапони полицин киревсĕр ĕçĕсене кура совет граждăнĕсем хушшинче канăçсăрлăх, тарăху ӳсе пырать. Йулашки вăхăт хушшинче совет граждăнĕсене час-часах ирексĕрлесе ССРС гражданствине пăрахтарма уççăнах тăрмашаççĕ. Çакăнпа пĕрлех совет граждăнĕсене хирĕç массăлă погром тума хатĕрленни уççăн курăнса тăрать. Полицейскисем çуртсене пăха-пăха çавăрнаççĕ. ССРС граждăнĕсем пурăнакан çуртсем çине вара темĕнле уйрăм паллăсем лартса хăвараççĕ. Белогвардейĕцсен пичечĕ, полицин çак ĕçĕсем çинчен пĕлтересе, хăй йенчен намăссăрăн çырать, пӳртсем çинчи паллăсем „тăшмансене палласа илме пулăшаççĕ" тет. Паллах ĕнтĕ, çак пĕтĕм ĕçсем çинчен Йапони-Манчжури влаçĕсем пĕлсе тăраççĕ çеç мар, вăл ĕçсем вĕсен хӳтлĕхĕ айĕнче пулса пыраççĕ, вĕсем граждăнсен положенине хире-хирĕç хутшăнусем тăрăх йĕркелесе пыни çинчен шухăшламаççĕ чулас. (ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

◆ Ленинградра Смольнăйри культурă çурчĕ пуçарнипе ĕççыннисем самодеятельнăйне вĕçсе канса çӳрессине организациленĕ. Икĕ уйăх хушшинче самодеятельсемпе 4 пин çын ытла вĕçсе çӳренĕ.

● Июлĕн 24-мĕшĕнче Куйбышĕвра физкультурниксен 20 пин çынлă парачĕ пулса иртнĕ. Ку парада ленинла комсомол 20 çул тултарнă йатпа туса иртернĕ. (ТАСС).

В. К. Коккинакипе А. М. Брйандинскине çĕнĕ çар званисем панă

Оборонă Халăх Комиссарĕн Совет Сойузĕн Маршалĕн К. Й. Ворошилăв йулташăн приказĕпе Совет Сойузĕн Геройне В. К. Коккинаки майора комбриг çар званийĕ панă. Совет Сойузĕн Геройне А. М. Брйандинский майора комбриг çар званийĕ панă.

П. Д. Оçипенко, В. Ф. Ломако льотчицăсене тата М. М. Расковă штурмăна çĕнĕ çар званисем панă

Оборонă Халăх Комиссарĕн Совет Сойузĕн Маршалĕн К. Й. Ворошилăв йулташăн приказĕпе çар льотчицине аслă лейтенанта П. Д. Оçипенкона капитан çар званийĕ панă. Çар льотчицине аслă лейтенанта В. Ф. Ломакона капитан çар званийĕ панă. Штурмăна лейтенанта М. М. Расковăна аслă лейтенант çар званийĕ панă.

Сывлăшран тата химилĕ тапăнуран сыхланасси

Мускав, Ленинград, Кийĕв, Минск, Баку, Владивосток тата Хабарăвск хулисенчи предприйатисенче тата пурăнмали çуртсенче ПВХО йенĕпе массăлă вĕренӳсем пыраççĕ. Вăл вĕренӳсем августăн 15-мĕшĕччен пыраççĕ. Çентйабĕрĕн І-мĕшĕнчен пуçласа октйабĕрĕн І-мĕшĕччен хулари вĕренӳсем пулса иртмеле.

ССР Сойузĕн Осоавиахим Тĕп Совечĕ ăмăртăва хутшăнса хăйсене палăртнă чи лайăх хуласене, районсене, руководительсене тата уйрăм учрежденисене премисем пама 250.000 тенкĕ ытла укçа уйăрнă.

Тырпулсене пухса кĕртни

Июлĕн 20-мĕшне Совет Сойузĕ тăрăх пучахлă тырпулсене 20.606 пин гектар вырнă—плана 23 процент тултарнă. Вунă кун хушшинче 14 мĕлйун гектар ытла вырнă.

Тырра комбайнсемпе вырса пуçтарас плана МТС-сем тата Совхозсен Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем 23 процент тултарнă. (ТАСС).

Чукунçул работникĕсен сталинла кунĕ умĕн

Июлĕн 30-мĕш—чукунçул транспăрчĕшĕн историлĕ кун. Вăл кун, виçĕ çул кайарах, чукунçул работникĕсене Кремльре Сталин йулташ тата партипе правительствă руководителĕсем йышăннă.

1936 çулхи июлĕн 28-мĕшĕнче, çав чаплă та паллă кунранпа çулталăк тулас умĕн, Сталински, Донецки, Октйабĕрски т. ыт. чукунçулсем çинче ĕçлекен рабочисемпе служăщчисем ытнине—чукунçул работникĕсене партипе правительствă йышăннăранпа çулталăк тулнă кун—июлĕн 30-мĕшĕнче çулсеренех Совет Сойузĕнчи чукунçул транспăрчĕн Пĕтĕм Сойузри кунĕ тума ытнине правительствă пурнăçа кĕртнĕ.

Хăйсен йуратнă халăх комиссарĕ Каганович йулташ йертсе пынипе Пĕтĕм Сойузри чукунçул работникĕсен тăватăмĕш сталинла кунне кĕтсе илме калама çук пысăк çĕкленӳпе хатĕрленеççĕ.

Казах ССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем Турксиб работникĕсем Мастуков, Лазоренко, Стройков, Исабекăв тата Умарăв йулташсем республикăри чукунçул работникĕсене çыру урлă чĕнсе каланă, вăл çырура вĕсем стаханăвла-кривоносла ĕçлесе кольцевой çул тăрăх пăравуссем çӳресе ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума, çулсене хĕлле валли лайăх хатĕрлеме чĕнеççĕ. Пĕтĕм Турксиб тăрăх пăравуссене, станцăсене тата вакун участкисене обществăлă смотр тăвакан бригадăсем ĕçлеççĕ.

Бакури пăравус деповĕнче ĕçлекен стаханăвĕцсем--машинис Дуденко йулташпа унăн напарникĕ Алийĕв йул. хăйсен пассажир пăравусĕпе, пăравуса çул çинче йусамасăр, пăхтарма тата хурана çума депона кĕмесĕр 15 пин километр тума сăмах панă. Çак обйазательствăна вĕсем чыслăн пурнăçа кĕртеççĕ. Дуденко йулташ пăравусĕ 14 пин километра йахăн чупнă та ĕнтĕ. Пăравус техникă тĕлĕшĕнчен калама çук лайăх ĕçлет.

Июлĕн 25-мĕшĕнче Чусовайа станцинче комсомолĕцсем ĕçлекен пăравус машинисĕ Ромашĕв йулташ 2.900 тоннăлă тавар пуйăсĕн составне Валежнайа станцинчен Перме çитиччен ăнăçлăн илсе тухнă, вăл пăравуса техникăлă хăвăртлăхран сехетре 5-шер километр иртерсе чуптарнă. (ТАСС).

16 кун хушшинче нимĕн те туман

ШАХАСАН. (Хамăр корр). Правительствă Государствăн Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайомне кăларнине районри ĕççыннисем пысăк çĕкленӳпе, хаваççăн кĕтсе илчĕç. Малтанхи кунсенче çĕнĕ зайом ăнăçлăн сарăлчĕ. Пĕр ерне хушшинче (июлĕн 8-мĕш тĕлне) районри служăщчисемпе колхозниксем, ĕççынни йединоличниксем çĕнĕ зайома 236 пин тенкĕлĕх çырăннă. Анчах çак цифăр пайан кунччĕнех пĕр улшăнмасăр тăрать. Июлĕн 8-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 24-мĕшне çитиччен районра çĕнĕ зайома нимĕн чухлĕ те сарман. Иртнĕ çул çак вăхăт тĕлне 254 пин тенкĕлĕх çырăннă пулнă.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Андрей Иванов йертсе пыракан Уйкас Кипек йалсоветĕнче çĕнĕ зайом ăнăçлăн сарăлчĕ. Кунта суйлав кампаниччи агитатăрсем суйлав вăхатĕнчи паха опытсемпе усă курса, çĕнĕ зайом сарас тĕлĕшпе массăлă-ăнлантарулă ĕçе пĕр чарăнмасăр туса пычĕç. Çавăнпа та Уйкас Кипек йалсоветне кĕрекен Тельмăн йачĕпе тата Куйбышĕв йачĕпе тăракан колхозсенче июлĕн 7--8-мĕшĕсенчех пĕр колхозник те çĕнĕ зайома çырăнмасăр йулман.

Зайом сарас ĕç уйрăмăнах Шыбулка, Вăрманйал, Йенĕш т. ыт. йалсоветсенче начар пырать. Шыбулка йасоветĕнче иртнĕ çулхи зайома 10 пин тенкĕлĕх çырăннă пулсан, кăçал 1.725 тенкĕлĕх çеç сарнă. Вăрманйал йалсовет председателĕ Васильйĕв, çекретарĕ Степанăв тата йалсоветăн ытти членĕсем зайом сарассипе нимĕн те тумаççĕ. Степанăв зайом сарас ĕçре хăй чăрмантарса пырать. Вăл иртнĕ çулхи зайомшăн укçине тӳлесе татнă çынсене ку таринччĕнех облигацисене алла памасăр тăрать. Шĕкĕр йалсоветĕнчи Тарасăв колхозник иртнĕ çулхи зайомшăн укçине тахçанах тӳлесе татнă, анчах ăна облигаци паман.

Ал. Соловйов.

ПĔЛТЕРУ

ПСК(б)П Обкомĕн парти вĕрентĕвĕн çуртĕнче РСДР Партин II-мĕш сйесĕ пулни 35 çул тултарнине кăтартакан выставкă уçăлнă.

Выставкăна екскурçисемпе тата пĕччĕншерĕн пыракансене кашни кунах кăнтăрла 3 сехетрен пуçласа каçхине 10 сехетчен консультаци тата справкăсем пăраççĕ.

Парти вĕрентĕвĕн çурчĕ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

ЧАССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн

Канашри Фельдшĕрсен шкулĕ

1938—39 вĕренӳ çулĕнче 1-мĕш курса вĕренекенсене илесси çинчен пĕлтерет

ВĔРЕНМЕЛИ СРУК 3 ÇУЛ

Пур граждăнсем те 15 çулхисенчен пуçласа 35 çулхисем таран вăтам шкулăн 7 класĕ чухлĕ пĕлӳ илнисем вĕренме кĕме пултараççĕ.

Зайавленисене июлĕн 31-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Испытанисем августăн 1-мĕшĕнчен 20-мĕшĕччен пулаççĕ.

Вĕренме илнисене валли общежити пур, вĕреннине кура стипенди параççĕ.

Зайавленисене шкул директăрĕ йачĕпе çак документсемпе пĕрле йамала:

1. Хăш çулта çурални çинчен свидетельствă.
2. Вĕренни çинчен свидетельствă.
3. Сывлăх пирки справкă.
4. Çар тивĕçлĕхĕ çинчен справкă.
5. Икĕ фото-картăчкă (алă пусса çирĕплетни).
6. Паспăрта пĕрле илсе пымала.

Докумĕнтсене çителĕклĕ тăратманнисене зайавленисене пăхмаççĕ. Чĕнмесĕр пынисене испытанине кĕртмеççĕ.

Фельдшĕрсен шкулне кĕрекенсем туллимар вăтам шкул программи тăрăх çак предметсемпе испытани тытаççĕ: вырăс чĕлхи, физикă, математикă, географи тата обществоведени. Çичĕ çуллă шкула „отлично" паллăсемпе вĕренсе тухнисене, çавнашкалах вунă çуллă шкулсене, техникумсене, медицинăн вăтам шкулĕсене, рабфак пĕтернисене испытанисĕрех илеççĕ.

Испытани тытнисене августăн 21—25-мĕш кунĕсенче студентсен шутне илеççĕ.

Занйатисем çентйабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Шкул адресĕ: ЧАССР, гор. Канаш, Совбольница, фельдшерская школа.

ДИРЕКЦИ.

Заочниксене вĕренме илесси çинчен

Чăвашсен Государствă Педагогикă институтĕнче

истори, чĕлхепе литературă, физикă-математикă тата йестествоведени отделенисен пĕрремĕш курсне заочниксемпе екстернсене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет. Вăтам шкул пĕтернисене, чи малтан, Çутĕç Халăх Комиссариачĕ çистемин шкулĕсенче ĕçлекенсене илеççĕ. Отличниксене тата аслă шкулдран вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ.

Аттестаци витĕр тухнă тата шкулта ĕçлеме ирĕк панă учительсене заочнă вĕренĕве испытанисĕрех илеççĕ, анчах вĕсем вăл специальнăçри дисциплинăсене пĕлнине тĕрĕслеççĕ.

ИСТОРИ уйрăмне кĕрекенсемшĕн вырăс чĕлхипе (сочинени çырассипе тата грамматикăпа), литературăпа тата историпе; йестествознани уйрăмне кĕрекенсемшĕн вырăс чĕлхипе, литературăпа, физикăпа тата химипе; литературăпа чĕлхе уйрăмне кĕрекенсемшĕн вырăс чĕлхипе (сочинени çырассипе тата грамматикăпа), литературăпа тата историпе; физикă-математикă уйрăмне кĕрекенсемшĕн вырăс чĕлхипе, литературăпа, физикăпа тата математикăпа испытани пулать.

Зайавленисене институт директăрĕн адресĕпе çак докумĕнтсемпе пĕрле йамала:

1) автобиографи,

2) вăтам йе аслă шкултан вĕренсе тухни çинчен аттестат,

3) ĕçленĕ вырăнтан мĕнле ĕçре ĕçлени çинчен паспăрт №-не кăтартса справкă, (паспăрта хăйне пĕрле илсе пымала),

4) виçĕ фотоӳкерчĕк (ӳкерчĕкĕ çарапуçăн 3х4 сантиметр пысăккĕшĕ пулмала) хăй алă пусса государствă учрежденийĕнче çирĕплеттермеле.

5) райçутĕçпайĕ панă командировкă тата 6) аттестаци комиççи йышăннă решени копийĕ.

Испытани педагогикă институтĕнче 1938 çулхи августăн 1-мĕшпе 20-мĕш хушшинче пулать.

ДИРЕКЦИ.

Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн

Йаçлĕсенче ĕçлекен сестрасене вĕрентмелли Канашри шкулĕ 1938—39 вĕренӳ çулĕнче

1-мĕш курса вĕренекенсене илесси çинчен пĕлтерет.

Вĕренмели срук 2 çул.

15 çулхисенчен пуçласа 35 çула çитнĕ граждăнсем арçынсемпе хĕрарăмсем, вăтам шкулăн 7 класне пĕтернисем пурте кĕме пултараççĕ.

Зайавленисене июлĕн 31-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Испытанисем августăн 1-мĕшĕнчен 20-мĕшĕччен пулаççĕ.

Вĕренме илнисене валли общежити пур тата вĕреннине кура стипенди параççĕ.

Зайавленисене шкул директăрĕ йачĕпе çак документсемпе пĕрле йамала:

1. Хăш çулта çуралнине кăтартакан свидетельствă.
2. Вĕренни çинчен свидетельствă.
3. Сывлăх пирки справкă.
4. Икĕ фото-картăчкă (алпуса çирĕплеттермелле).
5. Паспăрт пĕрле илсе пымала.

Докумĕнтсене çителĕклĕ тăратмасан зайавленисене пăхмаççĕ. Чĕнмесĕр пынисене испытанине кĕртмеççĕ.

Шкула кĕмĕ чух туллимар вăтам шкул программи тăрăх испытани тăваççĕ: вырăс чĕлхипе, математикă, физикă, географи тата обществоведени.

7 çуллă шкула „отлично" вĕренсе тухни çинчен аттестат тăратнисем тата çавнашкалах 10 çуллă шкулсемпе тан вĕреннисене испытанисĕрех илеççĕ.

Вĕренме илнисене августăн 21—25-мĕш кунĕсенче студентсен шутне кĕртеççĕ.

Занйатисем çентйабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Шкул адресĕ: ЧАССР, гор. Канаш, совбольница, школа медсестер.

Дирекци.

2—2

РСФСР ГОСПЛАНĔН

КУЙБЫШĔВРИ ПЛАН ИНСТИТУЧĔ

1938—39 вĕренӳ çулĕнче студентсене илесси çинчен пĕлтерет

ФАКУЛЬТЕТСЕМ: 1) промышленнăçа планласси, 2.) Йалхуçалăхне планласси.

Институт халăх хуçалăх планне туса пырас çĕрте ĕçлекен пысăк квалификацилĕ кадрсем хатĕрлет.

ВĔРЕНМЕЛИ СРУК 4 ÇУЛ

Зайавленисене августăн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Вĕренме кĕмелли условисем ытти аслă шкулсене вĕренме кĕмелли условисемпе пĕр пекех.

Испытанисем августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшĕччен пулаççĕ.

Зайавленисене çак адреспе йамала:

гор. Куйбышев, Кооперативная, 151. Плановый Институт.

Чăвашчăптапромсойузĕн

Йетĕрнери професçипе техникă шкулĕ

Стольарнăй, сĕтел-пукансем авса тăвакан уйрăмĕсене пĕрремĕш курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

ВĔРЕНӲ СРУКĔ 2 ÇУЛ

Вĕренме арçынсемпе хĕрарăмсене те 16 çулхисенчен пуçласа 30 çулхисем таран, туллимар вăтам шкулта 5—6 класосенчен вĕренсе тухнисене илеççĕ. Испытани (вырăс чĕлхипе, математикăпа тата политграмăтăпа) августăн 20-мĕшпе 25-мĕш кунĕсенче пулать.

Вĕренме илнисене 48 тенкĕрен пуçласа 112 тенкĕ таран вĕренме ĕлкĕрнĕ тăрăх стипенди параççĕ. Шкул çумĕнче столовăй тата общежити пур. Вĕренме Чăвашчăптапромсойуз тата Чăвашвăрманпромсойуз системинчи промартел членĕсене малтан илеççĕ.

Шкул кăтартнă производствăпа маçтăрсемпе инструктăрсем хатĕрлет.

Зайавленипе докумĕнтсемпе пĕрле çак адреспе йамала:

г. Ядрин, ЧАССР, улица Ленина, дом № 9. Профтехнической школе.

ДИРЕКЦИ.

Чебторгăн пĕрлешӳлĕ апатланас тĕлĕшпе ĕçлекен пайне

йалан ĕçлеме

бухгалтĕрсем, счетоводсем, поварсем, официанткăсем, буфет пуçлăхĕсем, кухня рабочийĕсем, посудă çăвакансем тата мороженăй сутакансем

кирлĕ

Адрес: ул. Кадыкова, дом №—5-12 в отдел общественного питания.

2—2

Шупашкарти Туберкульоз диспансерне

опытлă аслă сестра

кирлĕ

Пурăнмалли пӳлĕм пур.

Ĕç укçи государствă нормированийĕ тăрăх

2—2

Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариатне

аслă бухгалтĕр тата бухгалтĕр

КИРЛĔ.

Чăвашкинотрестне

йалан ĕçлеме

аслă бухгалтĕр заместителĕ, бухгалтĕр-ревизор тата счетовод-каççир

КИРЛĔ

Адрес: Чебоксары, здание Кинотеатра, Чувашкинотрест.

3—2

Уполномоченный Чувашглавлита № 394.

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № [illegible]